Республика библиотека им. М. Горького

ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

ЧĂВАШ КОММУНИ

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН ТАТА ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНĂЙ СОВЕЧĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

1952 çул Январь 13

ВЫРСАРНИКУН № 10 (8889)

Хакĕ 20 пус.

34-мĕш çул тухать.

ПАЯНХИ НОМЕРТЕ:

Ленин кунĕсем умĕн (1 стр.).
Совет Союзĕ тăрăх (1 стр.).
Республикăри предприятисенче (1 стр.).
Т. Зелснов.—Большевиксен партийĕн историйĕнчи паллă кун. Батумра социал-демократсен ленинла-искрăлла организацине тунăранпа 50 çул çитнĕ тĕле (2 стр.).
Н. Волков.—Выльăхсене хĕл кунĕсенче шăварасси çинчен (2 стр.).
Халăх демократи çĕршывĕсенче (2 стр.).
Наука çитĕнĕвĕсемпе малта пыракансен опытне производствăна анлă кĕртсе пырар. Вырăнти удобренисем—ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне ÿстермелли хăватлă резерв (3—4 стр.).
Корейăри ĕçсем (4 стр.).
Н. Бубнов.—Тĕнчери лару-тăру (4 стр.).
Демократиллĕ Германи республикин Халăх палатин председателĕ Дикман Хĕвеланăç Германи парламенчĕн председателĕ патне янă çыру (4 стр.).

Лекциллĕ пропагандăна вăйлатассишĕн

Пирĕн парти хăйĕн членĕсен идейăллă-теориллĕ шайне ÿстерес, массăсене марксизм-ленинизм вĕрентĕвĕпе воспитани парас ĕçе яланах пысăк вырăна хунă. Совет халăхĕ, Ленин—Сталин партийĕ ертсе пынипе, социализмлă общество туса çитернĕ, коммунизмлă общество туса пынă условире кадрсене теорие вĕрентесси, ĕçсыннисене коммунистла воспитани парасси уйрăмах питĕ кирлĕ ĕç пулса тăчĕ. Социализмран коммунизма куçса пынă чухнехи условисем пире пĕтĕм идеологиллĕ ĕçе сÿлĕрех пусăма хăпартма, ĕçсыннисене коммунистла воспитани парас ĕçе вăйлатма хушаççĕ. Коммунизмлă общество туса çитерме çынсен ăс-тăнĕнче юлнă капитализм юлашкисене пĕтермелле, халăхăн политикăллă тата культурăллă шайне çĕнĕ пусăма çĕклемелле.

Партин идеологиллĕ ĕçĕнче лекциллĕ пропаганда паха вырăн йышăнать. Сталин юлташ партин XVIII-мĕш съездĕнче тунă докладра пирĕн партин пичет урлă тата лекцисем вуласа пропаганда тăвас ĕçе организацилемелле, тесе кăтартса пачĕ. Лекцисем тăтăшах ирттерни коммунистсемпе комсомолецсен идейăллă шайне ÿстерме, совет интеллигенцине, мĕнпур ĕçсыннисене коммунистла воспитани пама пулăшать. Хамăр çĕршыв умĕнче тăракан хуçалăхлă-политикăллă задачăсене ăнăçлăн пурнăçлама совет халăхне мобилизацилес ĕçре те лекциллĕ пропагандăна лайăх организацилени питĕ кирлĕ.

ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ парти организацийĕсене лекторсене суйласа илес ĕçе тĕплĕ туса пыма, вĕсене воспитани парас тĕлĕшпе пĕрмаях ĕçлеме, лекцисен пахалăхне куллен-кун тĕрĕслесе тăма хушать.

ВКП(б) Центральнăй Комитечĕпе Сталин юлташ кăтартса пани тăрăх ĕçлесе, республикăри парти организацийĕсем лекциллĕ пропагандăна чылай вăйлатрĕç. Партин хула комитечĕсемпе райкомĕсем çумĕнче штатра тăман лекторсен групписене тунă, партипе совет ĕçĕнчи активран. совет интеллигенцийĕнчен уйăрнă çĕршер лекторсем ВКП(б) историйĕ, диалектикăллă тата историллĕ материализм, политэкономи, тĕнчери лару-тăру ыйтăвĕсем тăрăх лекцисем вуласа параççĕ, коммунизмлă общество тăвас ĕçри задачăсем çинчен, социализмлă строй капитализмлă стройран нумай малта тăни çинчен ĕçсыннисене ăнлантарса параççĕ.

Америкăпа Англи империалисчĕсен ытти çĕршывсене вăрçăпа тапăнмалли планĕсене тăрă шыв çине кăларасси, Совет Союзĕ ертсе пыракан демократи лагерĕн—империализма хирĕçле лагерĕн вăйĕсем ÿсе пынине, халăх демократи çĕршывĕсен çитĕнĕвĕсене, совет халăхĕпе тĕнчери мĕнпур ырă шухăшлă çынсем çирĕп миршĕн кĕрешсе тунă çитĕнÿсене кăтартса парасси лекциллĕ пропагандăра пысăк вырăн йышăнать.

Анчах лекциллĕ пропаганда ĕçĕ çаплах çителĕксĕр тăрать-ха. Хамăрăн кадрсем ыйтнине тивĕçтерме вĕсене Маркс—Энгельс—Ленин—Сталин вĕрентĕвĕпе хĕçпăшаллантарма лекциллĕ пропагандăна тата ытларах вăйлатас пулать.

Парти вĕрентĕвĕ енĕпе халĕ те çаплах ВКП(б) историйĕн ыйтăвĕсем, уйрăмах диалектикăллă тата историллĕ материализм ыйтăвĕсем тата политэкономи тăрăх лекцисем сахал вуласа параççĕ.

Хăшпĕр чухне лекцисене çителĕклĕ хатĕрленмесĕр ирттерни, марксизм-ленинизм теорине тата историри событисем çинчен вĕрентессине коммунизм строительствинчи практикăпа çыхăнтарма пĕлменни те пулать. Уйрăм лекторсем формулировкăсене пăтраштарни тата вырăнлă мар примерсем илсе кăтартни те пулкаланă. Çавăн пек çитменлĕх, сăмахран, ВКП(б) Етĕрне райкомĕн штатра тăман лекторĕн Шарабин юлташăн тата ытти хăшпĕр лекторсен ĕçĕнче пулнă.

Лекциллĕ пропагандăра чылай пысăк çитменлĕхсем пулни ВКП(б) райкомĕсемпе хула комитечĕсем хăшпĕр чухне çак ĕçе çителĕклĕ хакламанниччен, парти организацийĕсем коммунистсене, интеллигенцие, мĕнпур ĕçсыннисене идейăллă-политикăллă воспитани парас ĕçе кирлĕ пек тимлĕхпе туса пыманнинчен килет.

Лекцисене идейăпа теори тĕлĕшĕнчен паха иртттерме чи малтан лекторсене тĕрĕс суйласа илни, вĕсен ответлăхне ÿстерни тата вĕсен ĕçне куллен-кун тĕрĕслесе ертсе пыни кирлĕ. Лекцисем вулама теорие тĕплĕ вĕреннĕ работниксене ытларах хутшăнтарас пулать. Парти комитечĕсен лекторсене ăнăçлă ĕçлеме условисем туса памалла. Лекторсене лекцисем вулассипе çыхăнман ытти ĕçсем нумай хушни пулмалла мар. Лекторсен групписен тĕп задачи—марксизм-ленинизм теорине ывăнма пĕлмесĕр пропагандăласси пулать. Лекторсемпе тăтăшах семинарсем иртттермелле Хатĕрленĕ кашни лекцие пăхса тухасси, сÿтсе явасси çирĕп йĕрке пулса тăни кирлĕ. Лекцисен содержанине çеç мар, формине те, çавăн пекех лекцисем вулас ĕçри методика ыйтăвĕсене те сÿтсе явас пулать. Лекцире вырăнти фактсемпе тата илемлĕ литературăри тĕслĕхсемпе усă курни питĕ вырăнлă. Лекторсем пĕр-пĕрин лекцийĕсене итлени те кирлĕ. Лекторсен группи — творчествăллă коллектив, унăн хăйĕн ĕçне большевикла критикăпа самокритикăна никĕсе хурса туса пымалла.

Анчах чылай çĕрте лекторсен групписен ĕçне кирлĕ пек йĕркелемен-ха. Сăмахран, Чурачăк районĕнче парти вĕрентĕвĕн çулĕ пуçланнăранпа ВКП(б) райкомĕн лекторсен группи 25 лекци вуласа панă пулсан, пĕр лекцие те сÿтсе явман. Çĕмĕрле, Красноармейски, Сĕнтĕрвăрри тата ытти хăшпĕр районсенче те çавăн пекех.

Лектор пулма уйăрнă нумай коммунистсене лекци вулас ĕçе хутшăнтарман. Чкаловски районĕнче Юлдашев, Федорова, Гильманова юлташсем лекторсен группин членĕсем шутланаççĕ, анчах вĕсенчен пĕри те парти вĕрентĕвĕн çулĕ пуçланнăранпа лекци вуламан. Чурачăкпа Çĕрпÿ тата ытти хăшпĕр районсенче те çавăн пек фактсем пур.

Кашни лекторăн ответлăхне ÿстерес пулать. Лектор ĕçĕ—хисеплĕ ĕç. Унăн Ленинпа Сталинăн аслă идейисене массăсем хушшине çитермелле, ĕçсыннисене коммунистла воспитани парас ĕçре парти организацийĕсене пулăшмалла. Парти вĕрентĕвĕ ăнăçлă пуласси лекциллĕ пропагандăна кирлĕ пек туса пынинчен нумай килет.

Парти райкомĕсемпе хула комитечĕсем лекциллĕ пропаганда çинчен сахал сÿтсе яваççĕ. Лекторсен групписене хула комитечĕсемпе райком секретарĕсен ертсе пымалла, анчах хăшпĕр чухне ку ĕçе пропагандăпа агитаци пайĕсен заведующийĕсем туса пырасси çине шанса хурни пулать. Кун пек çитменлĕхсене пĕтермелле.

Марксизм-ленинизм теорине харпăр хăй тĕллĕн вĕренекенсене пулăшма лекциллĕ пропагандăна тĕпрен лайăхлатнипе пĕрлех, Политикăллă тата наукăллă пĕлÿсем саракан Пĕтĕм Союзри обществăн вырăнти уйрăмĕсем, çавăн пекех Советсен исполкомĕсен лекци бюровĕсем ĕçсыннисем хушшинче иртттерекен лекцисен пахалăхне ÿстерес, ку ĕçе тĕрĕслесе тăрас енĕпе те ĕçлемелле.

Лекциллĕ пропагандăна анлă сарни, лекцисен пахалăхне ÿстерсе пыни кадрсене марксизм-ленинизм теорине вĕрентес, ĕçсыннисене коммунистла воспитани парас ĕçре çĕнĕ çитĕнÿсем тума пулăшĕ.

Совет Союзĕ тăрăх

Каналсем çинче ĕçлеме—кадрсем

ДОН çинчи РОСТОВ, январĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Атăлпа Дон каналĕ çинче ĕçлеме нумай специалистсем кирлĕ.

Капитансемпе механиксене тата шкиперсене вĕрентсе хатĕрлеме Атăлпа Дон пароходстви шкулсем уçнă. Ростов хулинчи юханшывсем çинче ĕçлеме вĕренмелли ремесленнăй училищĕре халĕ 120 çын вĕренет. Навигаци уçăлсан вĕсем Атăлпа Дон тата Цимлянски тинĕсĕ çинче çÿрекен пăрахутсем çине ĕçлеме каяççĕ.

Дон бассейнĕн управленийĕ механиксемпе электромонтерсем вĕрентсе хатĕрлеме тытăннă. Çавăн пекех бакенщиксен курсĕсем те уçăлнă. Нумай пулмасть бакенщиксен ушкăнĕ Щербаков хули патĕнчи водохранилищĕре пулнă. Вĕсем унта ĕç йĕркипе паллашнă.

Цимлянски тинĕсĕ çинче ĕçлеме çак хĕлре 70 бакенщик вĕрентсе хатĕрлеççĕ.

Çĕре шăвармалли системăсем тума хатĕрленеççĕ

ЧКАЛОВ, январĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). ТАСС корреспонденчĕ «Средневолговодстрой» начальникĕпе Д. А. Кривошеев юлташпа калаçнă.

— Правительство йышăннă тăрăх,— тесе пĕлтернĕ Кривошеев юлташ,—Куйбышев гидроузелĕ вăйĕпе Атăл леш енче миллион гектар çĕр шăварса тăмалла пулать. Чкалов облаçĕнче 117 пин гектар çĕре шăвармалла тăваççĕ, шывне пуринчен ытла вырăнти юханшывсенчен илсе тăмалла. План тăрăх, шăваракан çĕр лаптăкĕ облăçра 1957 çул вĕçленнĕ тĕле, хальхипе танлаштарсан, çичĕ хут ÿсет.

Шăвармалли системăсем облаçăн 26 районĕнче тăваççĕ, унта темиçе çĕр колхоз тата совхоз çĕрĕсене шăварма тытăнаççĕ.

Плана пурнăçлама облăçра строительствăпа монтаж кантурĕсем тăваççĕ, вĕсене хăватлă техника параççĕ. Кăçалах ĕнтĕ Бузулук строительство кантурĕ хăйĕн тăватă участокĕнче ĕçлеме пуçлать.

«Средневолговодстрой» коллективĕн кĕске вăхăтра 1.000 километр тăршшĕ каналсем, автомобиль çулĕсем, 500 пĕве тата 400 насус станци тумалла пулать. Шыва хăпартма хăватлă электромоторсем, насуссем çĕршер вырнаçтарса лартмалла, тимĕртен тата асбестпа цементран тунă трубасем 10.000 тонна чухлĕ хывмалла.

Шăвармалли çĕрсем çинче ĕçлеме МТС-сем çумĕнче машинно-мелиоративнăй отрядсем тăваççĕ, вĕсен хăватлă техника пулать.

Ленинград Кÿлĕсемпе юханшывсенчи пулă хуçалăхĕн Пĕтĕм Союзри наукăпа тĕпчев институчĕ Куйбышевпа Сталинград водохранилищисенче хаклă пулăсем ĕрчетмелле тăвас тĕлĕшпе ĕçлет. Унта сазан, çупах, шăла пулă, осетр, стерлядь тата ытти хаклă пулăсем йышлă ĕрчетме хатĕрленеççĕ.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: профессор М. И. Тихий тата аслă научнăй сотрудник Н. И. Яндовская лабораторире ĕçлеççĕ.

Н. КАРАВАЕВА фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).



Украина ССР-ĕ. Кировоград облаçĕнчи Бобринецки МТС-ри паллă комбайнерсем В. Е. Бойкопа С. А. Сокуренко виççĕмĕш çул ăмăртса ĕçлеççĕ. Вĕсене ĕçре пысăк çитĕнÿсем тунăшăн Ленин орденĕпе наградăланă. Механизаторсем хăйсен машинисене юсаса çитернĕ, халĕ юлташĕсене пулăшаççĕ.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: В. Е. Бойкопа С. А. Сокуренко юсанă комбайна пăхса тухаççĕ.

Г. ВЕРУШКИН фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Казахстанри кендырь

АЛМА-АТА, январĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Казахстанра кендырь акса тăвакан колхозсенче çĕршер бригадирсем, звеньевойсем, колхозниксем курссемпе семинарсенче агротехникăна вĕренеççĕ. Вĕсем кендырь биологине, ăна акса тумалли майсене вĕренеççĕ. Кендырь акса тăвасси республикăри çĕр колхозра производствăн çĕнĕ отраслĕ пулса тăнă.

Юлашки икĕ çул хушшинче çак хаклă культурăна акса тума тытăнас тĕлĕшпе нумай ĕçсем туса иртттернĕ. Колхозсенчи питомниксенче кендырь калчине çитĕнтернĕ. Кăçал республикăра малтанхи хут производствăра усă курма кендырь лартса хăвараççĕ. Вăл лаптăк 1951 çулта кендырь йышăннă лаптăкран 8 хут пысăкрах пулать.

Кзыл-Ордара кендырь заводĕ туса пĕтереççĕ. Çавăн пек предприятисем республикăра тата тăватă çĕрте пулаççĕ.

Украинăра йывăç нумай лартнă

КИЕВ, январĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Иртнĕ çулталăкра Украинăри вăрман хуçалăхĕсенче ĕçлекенсем çĕнĕ çитĕнÿсем тунă. Вĕсем государство вăрманĕсенче тата колхозсен çĕрĕсем çинче йывăçсем лартса хăварас тата вăрмансенче мелиораци ĕçĕсене тăвас тĕлĕшпе хăйсем çине илнĕ обязательствăсене иртттерсе пурнăçланă. Пĕтĕмпе 196 пин гектар çине йывăç лартса хăварнă. Кăçал республикăра тата 16 пин гектар çине йывăç лартса хăвармалла. Украинăри вăрман хуçалăхĕсем тĕрлĕ йывăçсен вăрлăхĕсене 18 пин тонна хатĕрленĕ. Питомниксенче урăх çĕре куçарса лартма икĕ миллиард тĕп ытла хунав ÿстернĕ.

Йывăçсем лартас ĕçсене ытларах механизацилеме палăртнă. Ĕçсене механизацилени ĕç тухăçлăхне ÿстерме май парать, тата рабочисен ĕçне çăмăллатать.

1951—1952 ÇУЛСЕНЧИ КĔРКУННЕПЕ ХĔЛЛЕХИ ВĂХĂТРА ЙЫВĂÇ ХАТĔРЛЕМЕЛЛИ ПЛАНА «ЧĂВАШВĂРМАН» ТРЕСЧĔ ЕНĔПЕ 1952 ÇУЛХИ ЯНВАРĔН 10-мĕшĕ ТĔЛНЕ ТУЛТАРНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА

(процентпа)

РАЙОНСЕМ	Касса хатĕрленĕ	Çул хĕррине илсе тухнă	Турттарса кăларнă
Улатăр	61,2	64,1	41,3
Элĕк	66,5	54,0	32,7
Вăрнар	73,9	57,5	34,0
Йĕпреç	63,8	50,5	35,5
Ишлей	46,3	—	18,9
Калинино	66,5	38,1	65,2
Канаш	68,7	71,6	53,4
Комсомольски	73,5	83,7	65,3
Куславкка	67,0	73,0	52,3
Красноармейски	52,5	18,7	34,9
Хĕрлĕ Чутай	70,0	49,5	—
Кувакино	40,5	50,0	16,3
Сĕнтĕрвăрри	63,7	47,5	27,0
Муркаш	105,6	108,2	—
Октябрьски	47,6	66,9	42,7
Первомайски	75,6	37,8	54,0
Пăрачкав	67,0	72,4	67,7
Советски	57,5	—	43,6
Сĕнтĕр	87,4	23,3	52,0
Вăрмар	50,1	60,4	24,4
Çĕрпÿ	49,5	64,8	38,7
Шупашкар	76,1	117,6	24,4
Чкаловски	82,2	51,7	38,7
Чурачăк	64,1	40,4	26,4
Шăмăршă	50,6	60,1	40,4
Шăхасан	59,8	62,8	35,3
Çĕмĕрле	100,3	61,5	107,0
Етĕрне	67,3	73,9	42,2
Елчĕк	26,1	44,5	30,6
Тăвай	45,4	62,3	29,0

Вутă хатĕрлеççĕ

Чăваш АССР Вырăнти топливо промышленность управленине пăхăнса тăракан Парат вăрманпромхозĕ 1951 çулхи производство планне срокчен тултарчĕ. IV-мĕш кварталта уйрăмах лайăх ĕçлерĕ. Вăрманпромхоз кварталти йывăç касса хатĕрлемелли плана 162 процент, каснă йывăçа турттарса кăлармалли плана 120 процент тултарчĕ.

Кадрти рабочисем В. Ильичев, С. Фокин, В. Гусев юлташсем ĕç нормине куллен икшер хут иртттерсе тултараççĕ. Вăрманпромхоз коллективĕ 1952 çулхи 1-мĕш кварталти плана срокчен тата иртттерсе тултарма, ĕçсыннисемпе учрежденисем валли вутă çителĕклĕ хатĕрлесе пама сăмах пачĕ.

РЕСПУБЛИКĂРИ ПРЕДПРИЯТИСЕНЧЕ

Ăмăрту вăйланать

КАНАШ. Вагонсем юсакан заводăн тимĕрçĕ цехĕ 1951 çулхи производство планне иртттерсе тултарнă. Люжев, Семенов, Галкин, Дементьев тимĕрçĕсем 1,5—3 çулхи ĕç нормине тултарнă.

Цех коллективĕ 1952 çулта çĕнĕ çĕнтерÿсем тăвассишĕн, стахановла ĕçлекен цех ятне илме тивĕçлĕ пуласшăн кĕрешет. Çак кунсенче цехри рабочисем, инженерсемпе техниксем тата служащисем 1952 çулхи плана декабрĕн 1-мĕшĕ тĕлне тултарма, планран иртттерсе 500 тонна деталь туса кăларма, 120 тонна тимĕр перекетлеме, производство культурине ÿстерме, продукцин хăйне ларакан хакне чакарма сăмах пачĕç, ытти цех коллективĕсене тата СССР Çул-йĕр министерствине пăхăнса тăракан вагон-юсакан заводсен тимĕрçĕ цехĕсен коллективĕсене социализмлă ăмăртăва чĕнчĕç. Кашни рабочи уйрăм обязательство йышăнать.

Цех коллективĕ панă сăмаха чыслă пурнăçлассишĕн вăя шеллемесĕр ĕçлет. Цех иртнĕ вунăкунлăхри задание ăнăçлă тултарнă.

Ĕç нормине иртттерсе тултараççĕ

КУСЛАВККА. Суртсем тăвакан заводра 1952 çулхи плана срокчен тултарассишĕн социализмлă ăмăрту вăйланса пырать. Хăма çуракан цехри Ларионов юлташ ертсе пыракан рамщиксен бригади ĕç нормине куллен 130 процент ытла тултарса пырать. Суртсем тăвакан цехра ĕçлекен станочница, Чăваш АССР Верховнăй Совет депутачĕ М. Филиппова юлташ тата А. Аблясова станочница ĕç нормине куллен икшер хут иртттерсе тултараççĕ.

Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ завод коллективĕ пысăк хастарлăхпа ĕçлет. Нумай рабочисем нормăна иртттерсе тултараççĕ. Комсомолец С. Ф. Орлов автоматчик кулленхи задание пĕрмаях иртттерсе тултарать.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: цехри смена инженерĕ Ф. В. Константинов (сулахайри) С. Ф. Орлов тунă детале тĕрĕслет.

Г. ЗИНЬКОВ фотоÿкерчĕкĕ.

Фабрика плана иртттерсе тултарать

Шупашкарти чăлха фабрикин коллективĕ çĕнĕ çулта ĕçлеме пысăкрах ĕç нормисем йышăннă. Çĕнĕ ĕç нормисене иртттерсе тултарассишĕн цехсем, сменăсем, бригадăсем, рабочисем хушшинче социализмлă ăмăрту сарăлнă.

1952 çул пуçланнăранпа 10 кун иртрĕ ĕнтĕ. Фабрикăри кашни цехпа смена кулленхи задание иртттерсе тултарать. Çак хушăра чăлха çыхакан цех коллективĕ плана 105 процент ытла, сăрлакан цех—102 процент ытла, хатĕр продукцисен цехĕ—100 процент тултарнă.

У. Гурьева, А. Курябина, Е. Вулих кеттельщицăсем, чăлха çыхакан машина çинче ĕçлекен А. Рябина, Г. Антонова, Е. Иванова, О. Ильина стахановкăсем, Л. Салюкова, В. Терентьева мотальщица-стахановкăсем ĕç нормине 125—160 процент тултараççĕ. Фабрикăра ĕç нормине иртттерсе тултаракансен шучĕ ÿссех пырать.

Стахановецсемпе мастерсем, ĕç нормине иртттерсе тултарнипе пĕрлех, чĕртавар, электроэнерги ытларах перекетлессишĕн, продукци пахалăхне лайăхлатассишĕн ăмăртса ĕçлеççĕ. Ку кунсенче фабрика пĕрремĕш сорт продукци 88,5 процент туса кăларнă, урăхла каласан, задание иртттерсе тултарнă.

Продукци тăвасси ÿссе пырать

Шупашкарти макарон фабрикин коллективĕ 1952 çула планран иртттерсе пĕр миллион та 500 пин тенкĕлĕх продукци туса кăларнипе кĕтсе илчĕ.

Çĕнĕ çул умĕн фабрикăна тĕпрен юсаса çĕнетрĕç, цехсене çĕнĕ оборудованисем вырнаçтарса лартрĕç, нумай ĕçсене механизацилерĕç. Çакă коллектива ĕçре татах та пысăкрах çитĕнÿсем тума май пачĕ.

Халĕ фабрикăра çĕнĕ çулăн пĕрремĕш вунăкунлăхĕнчи ĕç итогĕсене палăртнă. Малтанхи итогсем коллектив продукци туса кăларассине ÿстерсе пыни çинчен калаççĕ. Чи хаклă продукци—макаронпа вермишель туса кăларасси, 1951 çулхи январĕн пĕрремĕш вунăкунлăхĕнчипе танлаштарсан, 17 тонна таран ÿснĕ.

М. Тарасовăпа М. Борисова юлташсен питĕ лайăх продукци тăвакан бригадисем тăрăшса ĕçлеççĕ. Вĕсем çĕнĕ çулăн малтанхи кунĕсенче сменăри нормăна иртттерсе тултарнипе пĕрлех, ялан паха продукци туса кăлараççĕ.

Уйăхри плана 50 процент тултарнă

Вăрнар апат-çимĕç комбиначĕ иртнĕ çулхи плана иртттерсе тултарнă. Халĕ комбинат коллективĕ 1952 çулхи плана срокчен тултарассишĕн, продукци пахалăхне лайăхлатассишĕн кĕрешет. Иртнĕ вунăкунлăхра комбинат уйăхри производство планне 50 процент ытла тултарнă. Вăл ĕçсыннисем валли крахмал, премĕк, сушка т. ы. те чылай туса кăларать.

Ленин кунĕсем умĕн

Республикăри ĕçсыннисем тĕнчери пĕрремĕш социализмлă государствăна тăваканĕ тата унăн руководителĕ, ĕçсыннисен аслă çулпуçĕ Владимир Ильич Ленин вилнĕренпе 28 çул тултарнине паллă тума хатĕрленеççĕ. Халĕ учрежденисемпе предприятисенче, колхозсемпе артельсенче çĕршер агитаторсем В. И. Ленин пурнăçĕпе унăн вилĕмсĕр ĕçĕсем çинчен докладсемпе лекцисем тата калаçусем иртттереççĕ. Çак кунсенче ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕ хулари агитколлектив руководителĕсемпе докладчиксем валли доклад иртттерчĕ. Унта «28 çул Ленинсăр, Сталин юлташ ертсе пынипе, Ленин çулĕпе» тема тăрăх доклад пулчĕ.

Çакăн пек докладсем республикăри ытти хуласемпе район центрĕсенче те туса иртттернĕ.

Шупашкарти Пионерсен çуртĕнче, шкулсенче Ленин кунĕсене хатĕрленнĕ май пионер дружинисен сборĕсем пулса иртеççĕ. Сборсенче В. И. Ленинпа И. В. Сталинăн аслă туслăхĕ çинчен калаçусем иртттереççĕ, Тăван çĕршыв, аслă çулпуççем çинчен çырнă сăвăсем каласа параççĕ, юрăсем юрлаççĕ.

Ленин кунне паллă тума хатĕрленнĕ май ВКП(б) Канаш хула комитечĕн парткабинетĕнче, хулари библиотекăра В. И. Ленин пурнăçĕпе ĕçĕсене кăтартакан фотоÿкерчĕксемпе кĕнекесенчен выставкăсем тунă.

Çавăн пек выставкăсем республикăри ытти район центрĕсенчи, колхозсенчи библиотекăсенче, вулав çурчĕсемпе клубсенче те йĕркелеççĕ.

Выльăхсене хĕл кунĕсенче шăварасси çинчен

Иртнĕ кĕркунне колхоз председателĕсемпе парторганизаци секретарĕсен тата фермăсенче ĕçлекенсен районти канашлăвĕ пулчĕ. Унта вĕсем обществăллă выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçармалли майсем çинчен тĕплĕ сӳтсе явреç.

— Выльăх-чĕрлĕхе хĕл кунĕсенче ăшă шывпа шăварассине йĕркелемесен, унăн тухăçлăхне ӳстересси çинчен калаçма питĕ йывăр,— терĕ канашлура Карл Маркс ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Н. Айкин юлташ.

Кӳ колхозра иртнĕ çулсенче обществăллă выльăх-чĕрлĕх валли тарăн çырмаран шыв йăтса тертленнĕ. Чылай чухне выльăхсене шывсăр тăратса хăварни те пулнă.

Карл Маркс ячĕпе тăракан колхоз членĕсем, фермăсене шыв илсе пырассине механизацилес тесе, 1951 çулта хăйсен вăйне те, укçа-тенкине те хĕрхенмерĕç. Двигатель вăйĕпе ĕçлекен насус ытлăнситлĕнех шыв хăпартать. Халĕ ĕнтĕ пысăк кормокухньăра çĕршер витре шыв вĕресе тăрать. Колхозра 185 ĕне, 390 сурăх. Вĕсем куллен çителĕклĕ таран ăшă шыв ĕçеççĕ. Çавăн пекех 280 сысна валли апат пĕçерме те шыв алă айĕнчех.

Механизаци усăллă пулни куç умĕнче: ферма работникĕсен чи йывăр ĕçĕ нумай çăмăлланчĕ, пур йышши выльăх-чĕрлĕхсем те сывă хĕл каçаççĕ, пăруланă ĕнесен сĕт тухăçлăхĕ палăрмалла ӳсет.

Иртнĕ кĕркунне çанталăк уяр пулнă пирки çăлсенчи тата пĕвесенчи шыв кăçал чакса юлчĕ. Малаллахине курса тăракан колхоз руководителĕсем хĕллехи тапхăрта выльăх-чĕрлĕх валли шыв çителĕклĕ пулмалла тăвассишĕн вăхăтрах кирлĕ ĕçсем туса ирттерчĕç.

Маленков ячĕпе тăракан колхозра çĕнĕрен 4 тарăн çăл чаврĕç, ыттисене пурне те тасатса юсарĕç. «Путь социализма» колхозра, фермăсенчен инçех мар гидростанци пĕви пур пулин те, обществăллă карташсенчи 8 çăла хĕллехи тапхăр валли хатĕрлерĕç. Ку колхозсенче çĕршер пуç выльăх-чĕрлĕхе шыв ăшăтса ĕçтерме тата апат хатĕрлесе пама оборудованипе ытти хатĕрсем çителĕклĕ. Икĕ колхозра та выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ӳстерессишĕн, уйрăмах ĕнесенчен нумайрах сĕт суса илессишĕн ăмăрту пырать.

Хĕл кунĕсенче выльăх-чĕрлĕхе ăшă шывпа шăвармалла тума Первомайски районĕнче, ытти районсемпе танлаштарсан, çăмăлрах. Вутă-шанкă çывăхра, кăмакасем тума кирпĕч çителĕклĕ, кормозапарниксемпе хурансем те пур. Ăшă шыв пирки çулленех пур çĕрте те сăмах хускатаççĕ. Анчах кăçал та районти чылай колхозсенче выльăх-чĕрлĕхе шывсăр хăварни çинчен пăшăрхантаракан хыпарсем каллех илтĕнме пуçларĕç. Мĕн чăрмантарать? Пĕртен пĕри—пĕчĕк колхозсенче пулнă кивĕ йăларан хăтăлайманни хытă такăнтарать.

Хрущев ячĕпе тăракан колхозра 1951 çулта 53 пин штук хĕртнĕ кирпĕч туса кăларчĕç. Ку шутран нумайăшне правлени тĕрлĕ организацисене сутнă, çав вăхăтрах фермăсем валли çителĕклĕ шыв ăшăтмалăх кăмакасем туса юлайман. Ĕнесене, вăл шутра пĕтĕ ĕнесемпе пăруланисене те, шăварма çырмана, вак патне хăваласа каяççĕ. Январь уйăхне çитсе те кунта фермăсем валли шыв кӳрсе тăрассине организацилемен.

«Сталинград» колхозра ĕнесен шучĕ икĕ хута яхăн ӳснĕ, анчах 1951 çулта государствăна сĕт-çу памалли плана тултарайман. Мĕншĕн! Мĕншĕн тесен кунта ĕнесен сĕт тухăçлăхне хĕллехи вăхăтра ӳстерсе пыма нимĕнле условисем те çук. Халĕ те 70 ĕнене вакри шывпа шăварса усраççĕ. Кун пек колхозсенче ĕнесенчен çулла, кĕтӳре çӳретсе тăрантарма тытăнсан тин, нумайрах сĕт-çу илме ĕмĕтленеççĕ.

«Красная Чувашия», «Алга», «Красный флот» колхозсенче те фермăсенчи çăлсем типсе çитсен çеç шыв çинчен аса илнĕ, выльăхсене шăварма ирĕксĕрех çырмана хăваласа кайма тивет. Сил-тăманлă е шартлама сивĕ кунсенче çавăн пек колхозсенче выльăхсене тăтăшах вăхăтра шăвармаççĕ. Çăлсене тасатса юсасан е шыв кӳрсе тăрассине йĕркелесен çав инкекрен хăтăлма пулĕччĕ.

Хĕл кунĕсенче выльăх-чĕрлĕхе ăшă шывпа шăварасси çинчен, яланхи пекех, чи малтан зоотехниксемпе ветеринарсем сăмах пуçлаççĕ. Вăл тĕрĕс. Анчах та специалистсем хăйсен ĕçĕнчи пуçарулăхпа палăрса тăраймаççĕ.

Турханти зоотехникăпа ветеринари участокне 6 колхоз кĕрет. Вăл шутран «Красная Поляна» колхозра çеç выльăх-чĕрлĕхе лайăх апатпа тăрантараççĕ тата яланах ăшă шывпа шăвараççĕ.

— Ытти колхоз руководителĕсене ӳкĕте кĕртсе пулмарĕ,— тет зооветеринари участокĕн заведующийĕ Скорополитова юлташ.

Зоотехник «Красная Поляна» колхозра 1951 çулта кашни ĕнерен мĕн чухлĕ сĕт суса илнине пĕлмест. Вăл малта пыракан колхозри выльăх-чĕрлĕх пăхакансен ĕçĕнчи опытсене хăй те тĕпчесе вĕренмен, çав опытсемпе ытти колхозсене те паллаштарма тăрăшман. Малта пыракансен паха опытне пропагандăласси, чи малтан, специалистсен ĕçĕ пулать ĕнтĕ. Анчах районти колхозсенче выльăх-чĕрлĕх пăхакансем хушшинче çавăн пек пропаганда туни ытла та сайра тĕл пулать.

Хĕллехи кунсенче ăшă шывпа шăварасси—выльăх-чĕрлĕхе тĕрĕс-тĕкел хĕл каçармалли тата унăн тухăçлăхне ӳстермелли чи кирлĕ условисенчен пĕри. Кашни колхозра, кашни фермăра çителĕклĕ таран ăшă шыв пултăр.

Н. ВОЛКОВ.
(Хамăр корр.).

Первомайски районĕ.

Пултарулăх коллективĕсенче

Халĕ ялсенчи художествăллă пултарулăх смотрне хатĕрленес ĕç пырать. Кашни районтах смотра хатĕрленсе ирттерес ĕçе ертсе пыма комиссисем тунă. Ку комиссисем, районти художествăллă пултарулăх коллективĕсене шута илсе тухса, вĕсене методикăллă пулăшу парса тăраççĕ.

Художествăллă пултарулăх коллективĕсен руководителĕсен пĕлĕвне ӳстерес тесе, декабрь уйăхĕнче халăх творчестви çурчĕ Шупашкарта колхоз хор руководителĕсен семинарне ирттерчĕ.

Художествăллă пултарулăх смотрне хатĕрленес ĕç Чурачăк, Чкаловски, Шупашкар, Улатăр, Йĕпреç, Комсомольски районĕсенче лайăхрах пырать.

Чурачăк районĕнчи культура çурчĕ ялсенчи художествăллă пултарулăх коллективĕсене пулăшас шутпа ятарласа искусство ĕçне пĕлекен çынсенчен бригада организациленĕ.

Смотра хатĕрленнĕ май, Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра хорпа драма коллективĕ организациленĕ. Колхозниксен хорне учитель П. Павлов ертсе пырать. В. Портнов колхозник ертсе пыракан драма коллективĕ смотрта Ф. Павловăн «Сутра» пьесине кăтартать.

Элĕкри культура çурчĕн хорĕ смотра тимлĕн хатĕрленет. Хор репертуарĕнче Г. Хирпӳн «Сталин çинчен хунă юрă», Ф. Лукинăн «Мирлĕ пурнăçшăн», Г. Лебедевăн «Эпир миршĕн» тата ытти юрăсем.

Комсомольски районĕнчи культура çуртĕнче смотрта Н. Гоголĕн «Авлану» пьесине чăвашла лартса парать, Калинино районĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхозăн драма коллективĕ Дияконовăн «Парнеллĕ туй» пьесине лартма хатĕрлет.

Смотрсем пынă вăхăтра районти культура çурчĕсенче харпăр хăй тĕллĕн вĕреннĕ художниксен ĕçĕсен выставкисем пулаççĕ. И. Кузьмин художник (Канаш районĕ) районти выставкăра кăтартма «Вăйлă тырпул» ятлă картина туса пĕтерет. А. Линков (Улатăр районĕ) «Индустри пейзажĕ», А. Петров (Калинино районĕ) «Тырпул пухса кĕртни» картинăсем çыраççĕ.

Смотра хатĕрленнĕ вăхăтра вулав çурчĕсемпе колхоз клубĕсенче çĕнĕрен художествăллă пултарулăх коллективĕсем организацилемелле, коллективсене колхозниксемпе ялти интеллигенцие ытларах хутшăнтармалла. Смотр ялсенчи культура ĕçне лайăхлатма, ĕçсыннисене коммунистла воспитани парас ĕçе вăйлатма пулăшмалла.

Н. АМУРЦЕВ.

Çĕнĕ юрăсем

Чăваш совет композиторĕсен союзĕн правленийĕн ларăвĕ пулса иртнĕ. Унта чăваш композиторĕсен çĕнĕ юррисене пăхса тухнă.

Ларура пулнă композиторсем тата поэтсемпе артистсем Чăваш АССР искусстви тава тивĕçлĕ деятелĕ Ф. Лукин В. Давыдов сăввиsen тăрăх «Ĕçри тантăшсем» ятлă, Чăваш АССР искусствисен тава тивĕçлĕ деятелĕ Г. Лебедев А. Алга сăмахĕсем тăрăх «Колхозниксен хорĕ» ятлă илемлĕ юрăсем çырнине палăртнă.

Ларура çавăн пекех çамрăк композиторсен çĕнĕ юррисене пăхса тухнă. Çамрăк композиторсем—А. Васильев «Мир юрри» (сăмахĕсем С. Шавлын), И. Степанов «Тулăх уй-хирсем» (сăмахĕсем З. Семеновăн), А. Токарев «Пирĕн ял каччи» (сăмахĕсем Н. Александровăн) тата А. Галкин «Алла тытрăм хуткупăс» (сăмахĕсем А. Маловăн)) юрăсем çырнă.

Ларура пăхса тухнă çĕнĕ юрăсене пурне те йышăннă.

Пысăк вылявсем

Совет çыннисем СССР государство заемĕсене пысăк çĕкленӳпе çырăнса илеççĕ, Тăван çĕршыв вăй-хăватне тĕреклетме пулăшаççĕ.

Государство ĕçсыннисене заем вылявĕсем тăрăх çулсеренех нумай укçа тӳлет.

Кăçалхи январь уйăхĕнче кăна нумай пин тенкĕ выляв тухнă. Январĕн 8-мĕшĕнче Шупашкарта 136 çынна 118.100 тенкĕ выляв укçи тӳленĕ. Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ заводри аслă мастер Я. Н. Штукатуров юлташ государство заемĕ тăрăх 10.000 тенкĕ, çул-йĕр работникĕ Н. Ф. Суханов юлташ 25.000 тенкĕ выляса илнĕ.

Нумай çынна 400 тата 200 тенкĕ выляв укçи тухнă.

Выляв укçи илнисем чылайăшĕ хăйсен укçине перекет кассине хываççĕ.



ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Элĕк районĕнчи «Динамо» колхоз клубĕн çурчĕ. Клубра 300 вырăнлă зал пур. Кунтах агрохимлаборатори тата библиотека вырнаçнă.
С. ВИКТОРИНОВ фотоӳкерчĕкĕ.

Халăх демократи çĕршывĕсенче

Албани Халăх Республики ултă çул тултарни

ТИРАНА, январĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Январĕн 11-мĕшĕнче Албани халăхĕ хăйĕн республикине туса хунăранпа ултă çул тултарнине уявлать.

Албани халăхĕ çак историллĕ çĕнтерĕве Совет Çарĕ гитлерла Германие çĕнтернипе тата Албани халăхĕ, Албанири мухтавлă ĕçлĕх партийĕ ертсе пынипе, наци ирĕклĕхĕшĕн ăнăçлă кĕрешнипе тума пултарчĕ, тесе çырать «Зери и Популлит» хаçат.

Пирĕн халăх демократи государстви, пролетариат диктатурин ĕçĕсене туса пырса, экономикăна план тăрăх малалла аталантарса пычĕ, халăх культурине аталантарчĕ, ĕçсынни массисен пурнăçне лайăхлатрĕ. Республика çĕнтерӳллĕ мухтавлă çула утса тухрĕ. Промышленноçпа ялхуçалăхĕ нумай вăйланчĕç, вăрçăччен хинчен нумай ытларах продукци туса кăлараççĕ.

Пир-авăрпа сахăр комбиначĕсем, Ленин ячĕпе тăракан гидроэлектростанци тата ытти пысăк предприятисем туса лартнă. Ĕçсыннисен пурнăçĕ лайăхланса, культури ӳссе пырать.

Албани Халăх Республикине аслă Совет Союзĕпе тачă çыхăнса ĕçленипе туса хунă. Албани халăхĕ хăйĕн çĕнтерĕвĕсене Совет Союзĕпе тачă çыхăнса ĕçленипе туса пычĕ. Демократиллĕ çĕршывсенчи ытти халăхсем пекех, Албани халăхĕ Совет Союзĕн опычĕ тăрăх çĕнĕ пурнăç тума вĕренсе пырать. Совет Союзĕ мораль енĕпе тата пурлăх тĕлĕшĕнчен пулăшса тăни, унăн социализм тăвас ĕçри опычĕ Албани халăхне малашне те çĕнтерӳсем туса пыма шанчăк парать.

Республика туса хунăранпа ултă çул тултарнине Албани халăхĕ государствăн пĕрремĕш пилĕк çуллăх планне йышăнма хатĕрленнĕ вăхăтра уявлать. Албани халăхĕ çак уява Мате юханшывĕ çинче пысăк гидроэлектростанци тума пуçланипе уявлать.

Америкăпа Англи империалисчĕсем тата вĕсене пулăшса тăракансем — Югослави, Греци тата Итали фашисчĕсем кировсĕр ĕçсем тума хăтланнине хирĕç Албани халăхĕ мухтавлă ĕçлĕх партийĕ тата унăн çулпуçĕ Энвер Ходжа тавра тата тачăрах пĕтĕçнипе ответлет. Албани халăхĕ хăйĕн малашлăхне шанса тăрать, мĕншĕн тесен вăл Совет Союзĕ, аслă Сталин ертсе пыракан мирпе демократи тата социализм лагерĕнче çирĕп тăрать.

Совет стахановецĕсен примерĕпе

БУХАРЕСТ, январĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Румынири промышленность предприятийĕсенче ĕçлекенсем материалсемпе тата ытти хатĕрсемпе тирпейлĕ усă курассишĕн кĕрешес ĕçре çитĕнӳсем чылай тунă. Металлурги, машиностроени тата хими промышленноçĕсен 63 предприяти коллективĕсем 1951 çулхи плана срокчен тултарнă. Çак коллективсем хуçалăх расчетне çирĕп пурнăçланипе, ĕç тухăçлăхне ӳстерсе пынипе оборотри укçа-тенкĕрен государствăна 240 миллион лей ытла укçа перекетлесе пама пултарнă.

Бухарестри йывăр машинăсем тăвакан, августăн 23-мĕшĕ ячĕпе тăракан заводăн коллективĕ укçа-тенкĕ çаврăнăшĕн срокне кĕскетсе 32 миллион лей перекетленĕ.

Кăçал металлургсем, машинăсем тăвакансем тата хуçалăхăн ытти отраслĕсенче ĕçлекенсем хăйсем çине 1952 çулхи пĕрремĕш кварталти плана срокчен тултарма обязательство илеççĕ. Вĕсем совет стахановецĕсен ĕç меслечĕсемпе анлă усă курнипе ĕçре пысăк çитĕнӳсем тума сăмах параççĕ. Хальхи вăхăтра металлурги промышленноçĕнче нумай токарьсем, фрезеровщиксем тата строгальщиксем—пĕтĕмпе 3 пин çын ытла совет стахановецĕсен примерĕ тăрăх тимĕре хăвăрт касма ăнăçлă вĕренеççĕ. Металлургсем хушшинче совет стахановки Нина Назарова пуçарнă ĕç меслечĕпе усă курса ĕçлекенсем 6 пин çынна яхăн.

1952 çулхи плана срокчен тултарассишĕн кĕрешеççĕ

СОФИЯ, январĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). 1952 çулта правительство Болгарие электрификацилеме тата йывăр промышленноçа аталантарма 30 миллиард лев ытла укçа пама палăртнă. Кăçал çĕнĕ строительство ĕçĕ анлă сарăласси çакăнтан курăнать: йывăр промышленность министерствин 4 заводне лартма 7 миллиард лев, электростанцисем лартма 11 миллиард лев расходламалла.

Болгарири ĕçсыннисем халăх хуçалăхĕн 1952 çулхи планне хапăл туса йышăннă. Халăх хуçалăхĕн 1952 çулхи планне пурнăçлани вăл Болгарире социализм никĕсне хывас ĕçре малалла тата тепĕр утăм туни пулать. Çав плана ăнăçлă пурнăçлани халăх пурнăçне татах лайăхлатать.

Фабрикăсемпе заводсенче, çĕнĕ стройкăсенче, транспортра производствăн кăçалхи планĕсене срокчен тултарассишĕн, ĕç тухăçлăхне малалла ӳстерсе пырассишĕн, чĕртаварпа материалсене перекетлессишĕн, продукцин хăйне ларакан хакне йӳнетессишĕн кĕрешесси анлăн сарăлнă.

Болгарири рабочисем производствăра совет стахановецĕсен пысăк тухăçлă ĕç меслечĕсемпе усă курма, Мария Рожнева, Лидия Корабельникова, Александр Чутких, Василий Королев тата ыттисен ĕç меслечĕсене пурнăçласа пыма хытă тăрăшаççĕ.

И. В. Сталин Сочиненийĕсен 13-мĕш томĕ венгер чĕлхипе пичетленсе тухнă

Венгрири ĕçсыннисен партийĕн «Сикра» издательстви И. В. Сталин Сочиненийĕсен 13-мĕш томне венгер чĕлхипе пичетлесе кăларнă. Кĕнеке тиражĕ—100 пин экземпляр

(ТАСС).

Кĕскен

УЛАТĂР. Нумаях пулмасть районта ялхуçалăх выставки пулса иртрĕ. Выставка чылай колхозсем пысăк çитĕнӳ тунине кăтартса пачĕ.

«Путь Ильича» колхоз пĕлтĕр обществăллă хуçалăха вăйлатса миллион тенкĕ ытла тупăш илнĕ. Колхозниксене кашни ĕçкунĕ çине икĕ килограмм тырă, икĕ тенкĕне яхăн укçа валеçсе панă.

«Победа», «Победа Октября» ялхуçалăх артелĕсем те пысăк çитĕнӳ тунă.

ТĂВАЙ. МТС машиновечĕ В. Петров юлташ колхозсене 895 тонна тырă çапса пачĕ, хăйне панă задание 224 процент тултарчĕ. Ĕçшĕн вăл 45 пăт тырă, 1.342 тенкĕ укçа илчĕ.

Большевиксен партийĕн историйĕнчи паллă кун

(Батумра социал-демократсен ленинла-искрăлла организацине тунăранпа 50 çул çитнĕ тĕле)

Большевиксен партине туса хурас ĕçре Сталин юлташ Кавказ леш енче организациленĕ большевикла организацисем питĕ пысăк вырăнта тăнă.

XIX-мĕш ĕмĕр вĕçĕнче, В. И. Ленин Петербургра хăй организациленĕ «Рабочи класа ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен союза»—революциллĕ марксистла парти пуçламăшне ертсе пынă вăхăтра, И. В. Сталин, 15 çулта пулнă чухнех революциллĕ ĕçе хутшăнса, Кавказ леш енче революци ĕçне вăрттăн туса пынă вырăс марксисчĕсемпе çыхăннă. 1898 çулта Сталин юлташ Грузири социал-демократсен «Месаме-даси» ятлă ушкăнне кĕрсе, часах унăн марксистла пайне ертсе пыма пуçланă. Кавказ леш енче «çак ушкăн («Месаме-дасин» сахалтарах йышлă пайĕ) революциллĕ социал-демократин пуçламăшĕ пулнă» (Л. Берия). Революциллĕ юхăмăн аталанăвĕ, Кавказ леш енчи ленинла-искрăлла организацисене тăвасси малашне пĕтĕмпех Сталин юлташ ячĕпе тачă çыхăнса тăнă.

Сталин юлташ 50 çул ĕлĕкрех тунă Батумри ленинла-искрăлла революциллĕ социал-демократсем организацийĕ Кавказ леш енчи большевиксен паттăр историне хутă страницăсенчен пĕри пулса кĕнĕ.

* * *

1902 çулхи январĕн 1-мĕшĕ (14-мĕшĕ) умĕнхи каç Сталин юлташ ертсе пынипе Батумри рабочисен социал-демократла кружокĕн представителĕсен конференцийĕ пулса иртнĕ, çак конференцире Батумра РСДРП-ăн ленинла-искрăлла пĕрремĕш комитетне тунă.

Ку тапхăрта Батум Кавказ леш енче Бакупа Тифлис хыççăн виççĕмĕш промышленность центрĕ пулнă. Унта промышленность предприятийĕсем 20 ытла шутланнă, вĕсенче 11.000 ытла тĕрлĕ национальность çыннисем ĕçленĕ. Рабочисен пурнăçĕ тӳсме çук йывăр пулнă. Вĕсем кунне 14—16 сехет, хăш чухне ытларах та ĕçленĕ. Ĕç укçине вара, уйрăмах вырăс мар рабочисене, çав тери сахал тӳленĕ. Экономикăлла йывăр пусмăра патша самодержавийĕ Кавказра туса хунă нациллĕ-колониллĕ йĕрке татах та йывăрлатнă.

Батумри рабочисен пурнăçĕ çинчен ленинла «Искра» Батумран янă корреспонденцире çапла çырнă:

«...Кунта фабрикăсене пăхса тăракан никам та çук. Хуçасене ашкăнса пурăнма кунта çав тери ирĕк. Вĕсем, пикамран та, нимĕнрен те хăрамасăр, мĕн тăвас тенĕ çавна тăваççĕ, вĕсем рабочисен пурнăçĕпе сывлăхĕн хуçисем, рабочисем вара—вĕсен чурисем пулса тăраççĕ.

Уйрăм хуçапа рабочисем хушшинче хирĕçӳсем тухсан, ĕçе околотокри надзиратель пăхса тухать, вăл, паллах, яланах, хуçа майлă пулать... Рабочисене хĕнесе пусараççĕ. Рабочисене надсмотрщиксем, заведующисем, механиксем тата директорсем хăйсем те хĕнеççĕ» («Искра», 16-мĕш №, 1902 çулхи февралĕн 1-мĕшĕ.

Батумри рабочисен терăхăвĕ ӳссе пынă, хăш чухне вĕсем эксплуататорсене хирĕç уйрăм выступленисем тунă. Анчах рабочисем организациленмен пулнă. Чăн кĕрешӳ пуçлама опычĕ политикăллă руководитель пулман-ха.

Батумра малтанхи хут социал-демократла организацисем тума çав вăхăтра Кавказ леш енче пурăннă вырăс социал-демократсем Иван Лузинпа Георгий Франчески тытăнса пăхнă. 1896 çулта вĕсем рабочисенчен пысăк мар социал-демократла кружок туса, унта Маркспа Энгельс вĕрентĕвне пропагандăланă. Кружок халăхăн йышлă массисемпе çыхăнса тăман тата вăл нумаях та ĕçлеймен. 1898 çулта кружока патша полицийĕ йĕрлесе тупса, аркатса тăкнă.

1901 çулта Батумра Тифлисри «Месаме-даси» ушкăнĕн членĕсем—пулас меньшевиксем Карло Чхеидзепе Исидор Рамишвили ĕçленĕ. Вăл çынсем, «Месаме-даси» ушкăнĕнчи ытларах пайĕн оппортунистла позицийĕ çинче тăрса, революциллĕ юхăма аталанма чарса пынă. «Вĕсем,—тесе çырать Л. П. Берия,—Батумри рабочисен пысăк мар ушкăнĕнче уççăнах культурăпа çутĕçне тата харпăр хăй тĕллĕн вĕренес ĕçе туса тăнă, пуринчен ытла рабочисене хут вĕрентекен шкулта лекцисем вуланă...» (Л. Берия. «Кавказ леш енчи большевикла организацисен историйĕ çинчен». 1948 çулхи издани, 29 стр.).

Çапла ĕнтĕ, 1901 çул вĕçĕнче Батумра социал-демократла организаци пулман, çавăнпа та Батумри рабочисем хушшинче нимĕнле революциллĕ ĕç те туса пыман. Çав вăхăтрах Тифлиспа Баку хулисенче организациленĕ рабочисен юхăмĕ ӳсĕçсем ӳссе пынă.

1901 çулхи ноябрьте, РСДРП Тифлисри комитечĕ хушнипе, Батума социал-демократла организаци тума Сталин юлташ пынă. Вăл малта пыракан рабочисемпе çыхăнса, фабрикăсемпе заводсенче часах социал-демократла 11 кружок организациленĕ. Çак кружоксенчен нумайăшне Сталин юлташ хăй ертсе пынă.

Рабочисен вăрттăн пухăвĕсенче тухса каласа, Сталин юлташ патша самодержавийĕпе капитализма çĕнтерес ĕçри пролетариатăн историллĕ рольне уççăн ăнлантарса панă. Сталин юлташ «Месаме-даси» ушкăнĕнчи оппортунистла пайĕн сутăнчăкла ĕçне, хăйсен «çутĕçĕпе» вĕсем рабочисене революциллĕ кĕрешӳрен пăрса ярса, тред-юнионизм шурлăхне илсе кĕнине ывăнма пĕлмесĕр тăрă шыв çине кăларса пынă. Сталин юлташ малта пыракан рабочисенчен опытлă организаторсемпе агитаторсене вĕрентсе ӳстернĕ, вĕсене конкретнăй ĕçсем панă, революциллĕ ĕçе активлăн хутшăнтарса пынă. Çапла вăрттăн ĕçлекен социал-демократла организаци тума никĕс хатĕрленĕ.

Сталин юлташа хытă сăнаса тăракан жандармери охранки çапла пĕлтернĕ:

«...1901 çулта кĕркунне Российăри социал-демократла рабочи партин Тифлисри комитечĕ хăйĕн членĕсенчен пĕрне Иосиф Виссарионович Джугашвиличе, малтан Тифлисри духовнăй семинарире 6-мĕш класра вĕреннĕскерне, Батум хулине заводри рабочисем хушшинче пропаганда тума янă хыççăн, социал-демократла организацисен аталанăвĕ пысăк çитĕнӳсем турĕ... Джугашвили ĕçленине пула тата вăхăчĕ-вăхăчĕпе Тифлисран килсе тăракан пропагандистсене пула Батумри пур заводсенче те часах социал-демократла организацисем пулса тăчĕç...».

1902 çулхи январĕн 1-мĕшĕ (кивĕ стильпе) умĕнхи каç малта пыракан рабочи Сильвестр Ломджария хваттерĕнче рабочисен социал-демократла кружокĕсен представителĕсен конференцине пухнă. Унта 25 çынна яхăн пулнă. Конференци РСДРП Батумри комитетне организациленĕ, комитета Сталин юлташ ертсе пынă. Комитет составне Сталин юлташпа пĕрле тата çак юлташсем кĕнĕ: С. Ломджария, И. Дарахвелидзе, С. Тодрия, М. Габуния тата ытти те.

Конференци çинчен охранка ан пĕлтĕр тесе, ăна çĕнĕ, 1902 çула кĕтсе илнĕ пек туса ирттернĕ. Конференцире пулнă çынсем аса илнĕ тăрăх, Сталин юлташ хăйĕн сăмахĕнче пролетариатăн класс кĕрешĕвĕнчи задачисем çинчен, рабочи класс пуçне тăрса, унăн хăватлă вăйĕсене самодержавипе буржуазие хирĕç кĕрешме ертсе пыракан марксистла революциллĕ парти тума кирли çинчен каланă.

...Чӳречерен шурăмпуç сути курăнсан,—аса илет П. Куридзе,—Сталин çапла каларĕ:

— Акă, тул çутăлчĕ! Часах хĕвел тухĕ. Ку хĕвел пирĕншĕн ялкăшса тăрĕ.

Çак конференци хыççăн Батумри социал-демократла организаци Сталин юлташ ертсе пынипе рабочисем хушшинче тата хула çывăхĕнчи хресченсем хушшинче революциллĕ ĕçе тата ытларах вăйлатса янă.

РСДРП Батум комитечĕ январь пуçламăшĕнче пысăк мар типографи тунă, листовкăсемпе прокламацисем пичетлесе кăларма пуçланă, вĕсене пуринчен ытла Сталин юлташ çырнă. Фабрикăсемпе заводсенче темиçе хут та рабочисен забастовкисене организацилесе ирттернĕ. Батумри чи пысăк событи вăл 1902 çулхи мартăн 9-мĕшĕнчи Батумри рабочисен политикăллă пысăк демонстрацийĕ пулнă. Ку демонстрацие Сталин юлташ организациленĕ, вăл демонстрантсем умĕнче чи малта пынă. Çак демонстраци Кавказ леш енче кăна мар, пĕтĕм Российăра революциллĕ юхăма малалла ӳсме нумай пулăшнă. Кунта стачка политикăллă демонстрацие пĕрлешнĕ.

Çапла, оппортунизма хирĕç хăватлă кĕрешсе пырса, Сталин юлташ ертсе пынипе Кавказ леш енчи ленинла-искрăлла организаци пуçланса, ӳссе, çирĕпленсе пынă, ăна пролетариллĕ интернационализм никĕсĕ çинче, ленинла принципсен никĕсĕ çинче тунă.

Батумри пролетариатăн революциллĕ кĕрешӳ ӳсĕмĕ патша правительствине шиклентерсе ӳкернĕ. «Пуçаракансене» шырама пуçланă. Вара патша полицийĕ Сталин юлташа йĕрлесе тытса, 1902 çулхи апрелĕн 5-мĕшĕнче арестлесе тĕрмене хупнă. Тĕрмере чухне те Сталин юлташ рабочисемпе çыхăну тытнă, Кавказ леш енчи рабочисен революциллĕ кĕрешĕвне ертсе пынă. Çак кĕрешӳ ытларах та ытларах организациленсе, пысăк политикăллă вăй пулса сарăлса пынă.

* * *

Сталин юлташ Батумра ленинла-искрăлла социал-демократла организаци тунăранпа çур ĕмĕр иртрĕ. Сталин юлташ хĕвел ĕçсыннисемшĕн ялкăшса çутатас телейлĕ вăхăт çитесси çинчен пророк пек каланă сăмахсем чăн пулчĕç.

34 çул ытла социализм хĕвелĕ пирĕн Тăван çĕршыва çутатса тăрать. Совет Союзĕнчи ĕçсыннисем, Ленин—Сталин партийĕ ертсе пынипе, помещиксемпе буржуази власне тĕп турĕç, социализмлă общество туса çитерсе, Сталин юлташ кăтартса панă çулпа малалла, коммунизм патне пыраççĕ.

Совет Союзĕнчи коммунизм строительствин пуян опычĕпе усă курса, халăх демократи çĕршывĕсенчи ĕçсыннисем халĕ социализм тăвассишĕн ăнăçлăн кĕрешеççĕ.

Батумри социал-демократла организацие—большевиксен партийĕн малтанхи кĕрешӳ отрядĕсенчен пĕрине тунăранпа 50 çул çитнине палăртса, совет халăхĕ большевиксен паттăр партийĕн, Ленин—Сталин партийĕн историйĕнчи çак паллă куна ялан аса тытать.

Т. ЗЕЛЕНОВ,
истори наукисен кандидачĕ.

Наука çитĕнĕвĕсемпе малта пыракансен опытне производствăна анлă кĕртсе пырар

ВЫРĂНТИ УДОБРЕНИСЕМ—ЯЛХУÇАЛĂХ КУЛЬТУРИСЕН ТУХĂÇЛĂХНЕ ŸСТЕРМЕЛЛИ ХĂВАТЛĂ РЕЗЕРВ

Пирĕн колхозсен опычĕ çакна кăтартса парать: тислĕк тата вырăнти удобренисем ытларах хатĕрлени, вĕсене типтерлĕ сыхласа, пĕлсе усă курни ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне шанчăклă ÿстерсе пымалли çăлкуç пулса тăрать.

Вырăнти удобренисемпе анлă усă курса тата малта пыракан агротехникăн ытти ĕçĕсене пурнăçласа, Чăваш АССР-ĕнчи Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз, Чăваш АССР-ĕнчи Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз, Мускав облаçĕнчи Коммунистически районĕнчи Димитров ячĕпе тăракан колхозри А. С. Бардоева юлташ ертсе пыракан уй-хир бригади, çав районти Сталин ячĕпе тăракан колхозри П. Ф. Прусова юлташ ертсе пыракан уй-хир бригади тата ыттисем те вăтам шутпа кашни гектартан темиçе çул хушши ĕнтĕ 20—30 центнер тĕштырă, пысăк тухăçлă техникăллă культурăсем, çĕрулми, курăксем, пахча çимĕç пухса кĕртеççĕ.

Горький облаçĕнчи Шатки районĕнчи «Власть Советов» колхоз уй-хире вырăнти удобренисем нумай кăларать. Çанталăк условийĕсем килĕшÿллех пулмарĕç пулин те, колхоз 1951 çулта 123 гектар çинче кашни гектартан 25,8 центнер кĕрхи тулă, 204 гектар çинче 20,8-шер центнер çурхи тулă, мĕнпур йышши тĕштырăсене илес пулсан, 1.086 гектар çинчен 19-шар центнер пухса кĕртрĕ. 1951 çулта вăтам шутпа çĕрулми тухăçлăхĕ кашни гектартан 212 центнер тухнă (пурĕ 126 гектар лартнă). Çакăн пек çитĕнÿсене тахçан ĕлĕк начар пулнă çĕр çинче тунă.

Мускав облаçĕнчи Коммунистически районĕнчи колхозсем агротехникăллă ĕçсене лайăхлатса пыраççĕ, пур йышши вырăнти удобренисемпе те пĕлсе усă курма тăрăшаççĕ, вырăнти удобренисем кăларассине гектар пуçне 9,5 тоннăна çитерсе, кунти колхозсем кĕллĕ тăпрасем çинче акса тăвакан тырпул тухăçлăхне 1940 çулта пухса кĕртнĕ 14 центнертан юлашки пилĕк çул хушшинче вăтам шутпа кашни гектар пуçне 20 центнера çитернĕ, ир тата кая юлса пулакан çĕрулмине кашни гектартан 200 центнер ытла туса илеççĕ.

Киев облаçĕнчи Бровар районĕнчи Хрущев ячĕпе тăракан колхоз вырăнти удобренисемпе усă курассине ÿстерсе тата симĕс удобрени валли люпин нумай акса çăмăл, начар тăпра çинче ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне икĕ хут ÿстерме пултарнă. Кунти колхозра кашни гектартан туса илекен кĕрхи тулă тухăçлăхĕ 24 центнера, уйрăм участоксем çинче—29 центнера, çĕрулми тухăçлăхĕ—230 центнера, кукуруза тухăçлăхĕ 50 центнера çитнĕ.

Минск облаçĕнчи Минск районĕнчи Гастелло ячĕпе тăракан колхоз торфпа тата торфотуфпа (тăпрана извĕçлеме) усă курса кĕллĕ тăпрасем çинче нумай çул ÿсекен курăксен утă тухăçлăхне кашни гектар пуçне 45 центнера çитернĕ, тĕштырăсен тухăçлăхĕ 1946 çулта гектар пуçне 6,3 центнер пулнă пулсан, 1951 çулта 17 центнера çити хăпарнă.

Колхозсене пĕрлештерсе пысăклатни мĕнпур йышши удобренисемпе анлăрах усă курма лайăх майсем туса пачĕ. Пĕрлешнĕ колхозсенче выльăх-чĕрлĕх фермисем пысăкланчĕç, обществăллă выльăх-чĕрлĕх шучĕ нумай ÿсрĕ. Çакна май тислĕк тата ытти вырăнти удобренисем ытларах хатĕрлеме май килет.

* * *

Мĕнпур йышши удобренисемпе пĕтĕмĕшпе тата пĕлсе усă курни—ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне ÿстермелли хăватлă май. Ку тĕлĕшпе колхозсенче резервсем чăнахах та питĕ пысăк. Халĕ уйрăмах çакă кирлĕ: пур колхозсенче те май килнĕ таран тислĕк ытларах хатĕрлемелле, ăна пĕтĕмпех хире кăлармалла, ÿсентăрана кирлĕ япаласем çухаласран асăрханмалла. Тĕрлĕ йышши компостсемпе—торфпа тислĕкрен, торфпа фекалирен, торфпа тислĕк шĕвекĕнчен тунă тата ытти тĕрлĕ компостсемпе анлă усă курмалла. Тислĕк шĕвекĕ, кĕл, çĕрĕк тăпри, минераллă удобренисем пекех, кĕрхи тырăсен калчисене çуркунне апат пама лайăх, вĕсем пысăк усă кÿреççĕ. Йÿçĕклĕ кĕллĕ тăпрасене массăллăн известь сапса юсани, симĕс удобрени валли люпин акни тăпра тухăçлăхне питĕ вăйлă ÿстермелли майсем пулаççĕ.

Халĕ, 1952 çулта вăйлă тырпул туса илмелли агротехника ĕçĕсене палăртнă вăхăтра, пур йышши удобренисемпе те тĕрĕс усă курас ыйту çине уйрăмах тимлĕ пăхмалла.

Нумаях пулмасть СССР Ялхуçалăх министерствин коллеги ларăвĕнче удобренисемпе усă курас ĕçри малта пыракан опыт çинчен чылай колхоз председателĕсем каласа панине итленĕ. Министерство коллегийĕ вĕсен ĕçне ырланă.

Вырăнти удобренисемпе усă курас ĕçри опыт çинчен колхоз председателĕсем тата агрономсем пĕрле çырнă статья пичетленет.

* * *

Торфа тислĕкпе пĕрле уйра компост тăваççĕ, вичĕ пай торф çумне пĕр пай тислĕк хушаççĕ.

Компост хывас умĕн лаптăка малтан юртан тасататççĕ, тĕпне торф сарса тухаççĕ (20—25 сантиметр хулăмăш), унтан çавăн чухлех тислĕк хураççĕ. Малалла та çавăн пекех тăваççĕ. Купа тăррине торфпа витеççĕ. Купа виçи: тĕпĕн сарлакăшĕ 3—3,5 метр, çÿлĕшĕ 2—2,5 метр, тăршшĕ 15—20 метр.

Торфпа тислĕкрен тунă компоста çĕрулми лартакан пусăна, пĕрремĕш хут сухаланă чухне çĕртме пуссине гектар çине 40-шер тонна кăлараççĕ.

Белоруссии ССР-ĕнчи колхозсенче те торфпа тислĕкрен тăвакан компоста нумай хатĕрлеççĕ. Полоцк облаçĕнчи Глубокое районĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхоз 1951 çулта хире 15.840 тонна торф кăларнă. Кунта торфа пĕтĕмпех тислĕкпе пĕрле компост тунă. Çакă ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне чылай ÿстерме пулăшнă. Кашни гектар çине 20—40 тонна компост кăларнă 120 гектар лаптăкран вăтам шутпа гектартан 17-шер центнер тĕштырă пухса кĕртнĕ. П. Е. Кочаковский юлташ ертсе пыракан бригада 7 гектар çинче кашни гектартан 23-шер центнер урпа туса илнĕ.

Торфа тислĕкпе, тислĕк шĕвекĕпе, фекалипе компост тусан, компостри ÿсентăрана кирлĕ япаласем лайăхланаççĕ, вĕсемпе ÿсентăрансем çăмăллăн усă курма пултараççĕ. Компостри япаласем сыхланса усраннаççĕ кăна мар, биологиллĕ процессем пулса иртнипе ÿсентăрансем усă курма пултаракан азот та нумайланать.

Тислĕке фосфорит çăнăхĕпе хутăштарса компост тăвасси çине уйрăмах тимлĕ пăхмалла. Кун пек чухне пĕр тонна тислĕке хутăштарма 10—20 килограмм фосфорит çăнăхĕ кирлĕ. Фосфорит çăнăхĕ пулăшнипе тислĕк хăвăртрах çĕрет, азота сахалтарах çухатать, çав вăхăтрах ÿсентăрансем, тислĕк пулăшнипе, фосфорит çăнăхне ытларах йышăнма пултараççĕ.

Наукăллă учрежденисен тĕпчевĕсем тата колхозсенчи производствăри опыт çакна кăтартса параççĕ: тислĕке фосфорит çăнăхĕпе хутăштарса тунă компост уйрăмах кĕрхи тырăсем çине нумай çул ÿсекен курăксем акма хатĕрлекен пусăна кăларсан пысăк усă кÿрет. Кун пек чухне компост усси тислĕке хăй тĕллĕн кăларнинчен 1,5—2 хут ытларах пулать. Чăваш АССР-ĕнчи Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз 1951 çулта тислĕкпе фосфорит çăнăхĕнчен 850 тонна компост туса хатĕрленĕ.

Удобренисене пухса хатĕрлесси тата хире кăларасси

Вырăнти удобренисен питĕ пысăк резервĕсемпе усă курассине, тислĕк, компостсем, тислĕк шĕвекĕ, торф кăларассине, çавăн пекех вырăнти ытти удобренисем ытларах хатĕрлессине, чи малтан, эпир çав ĕçсене тĕрĕс организацилени пурнăçлатпăр. Пирĕн колхозсенче кашни çулах удобренисем хатĕрлемелли тата вĕсемпе усă курмалли анлă план тăваççĕ.

Нумай çул ÿсекен курăксене кĕрхи тырăсемпе пĕрле акаççĕ пулсан, сăмахран, Горький облаçĕнчи Городец районĕнчи «Красный маяк» колхозра çĕртме пуссисене удобренисемпе лайăх çемçетеççĕ. Çакă вăл кĕрхи тырăсен тата курăксен тухăçлăхне ÿстерет. Курăксем пысăк тухăçлă пулни вара пусă çаврăнăшĕнчи мĕнпур культурăсем акакан тăпра тухăçлăхне ÿстерет. «Красный маяк» колхоз 1951 çулта 269 гектар çинче кашни гектартан вăтам шутпа 18,7 центнер кĕрхи тырăсем, çав шутран 99 гектар çинче 19,9-шер центнер кĕрхи тулă туса илнĕ. Кунта 1950 çулта çĕртме пуссисене кашни гектар çине торфпа тислĕкрен е торфпа фекалирен тунă компостсене 40-шер тонна ытла кăларнă.

Калинин облаçĕнчи Кашин районĕнчи «Красный путиловец» колхозра тырпул туса илмелли çичĕ уйлă пусă çаврăнăшĕ тунă, унта культурăсем çапла черетленсе пыраççĕ: 1) пĕрремĕш çул усă куракан клеверпа тимофеевка (вĕсене хутăштарса акнă); 2) иккĕмĕш çул усă куракан курăксем; 3) йĕтĕн; 4) çĕрулми тата çурхи тĕштырăсем; 5) сĕлĕ; 6) çĕртме 7) кĕрхи тырăсем, вĕсем çине курăксем акаççĕ. Кунта та çĕртме пуссисене удобренисемпе çемçетесси çине питĕ тимлĕ пăхаççĕ. Юлашки виçĕ çул хушшинче (1949, 1950, 1951 ç. ç.) çĕртме пуссинчи кашни гектар çине 40-шер тонна тислĕк кăларнă. Çĕрулми лартакан вырăна 20-шер тонна кăларнă. 1951 çулта «Красный путиловец» колхозра ялхуçалăх культурисен тухăçлăхĕ вăтам шутпа çакăн пек пулнă: ыраш гектартан 22 центнер, кĕрхи тулă—21,3 центнер, нумай çул ÿсекен курăксен утти—36 центнер, çĕрулми—221 центнер тухнă.

Çĕрулми тата пахча çимĕç ытларах пухса кĕртме тăрăшакан колхозсенче (хула çывăхĕнчи колхозсенче) çав культурăсене туса илекен вырăнсене органически удобренисем нумай кăларасси çине уйрăмах тимлĕ пăхаççĕ. Горький облаçĕнчи Шатки районĕнчи «Власть Советов» ялхуçалăх артелĕнче 1950 çулта кашни гектартан 240 центнер, 1951 çулта—212 центнер çĕрулми пухса кĕртнĕ. Çĕрулми лартакан пусăна кашни гектар çине 20-шер тонна тислĕк кăлараççĕ, кунсăр пуçне тата çĕрулми лартнă чухне йăрансенчи кашни тĕмĕне органически тата минераллă удобренисене хутăштарса параççĕ: гектар çине 4 тонна çĕрĕк тăпри, 1,5 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, пĕр центнер кĕл тата пĕр центнер суперфосфат. Колхозра çĕрулми хыççăн çурхи тулă акаççĕ. Вăл 1951 çулта вăтам шутпа 204 гектар çинче кашни гектартан 20,8 центнер тухнă. Çурхи тулă тухăçлăхне ÿстерме çĕрулми лартнă чух удобренисем кăларни лайăх пулăшать.

Удобренисем хатĕрлеме колхоз правленийĕсем кашни выльăх-чĕрлĕх фермине задани параççĕ. Унта выльăх-чĕрлĕх фермин çулталăкра миçе тонна тислĕк, тислĕк шĕвекĕ хатĕрлемеллине кăтартаççĕ, çавăн пекех тата обществăллă выльăх-чĕрлĕхрен, колхозниксен килти выльăхĕсенчен удобрени хатĕрлесе, кашни уй-хир бригади ăна хире мĕн чухлĕ кăлармаллине палăртаççĕ. Заданисенче кашни бригадăн мĕн чухлĕ кĕл, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухмаллине, компостсем тумаллине, органически тата минераллă удобренисенчен пĕрчĕлетнĕ удобренисем тата вĕсен хутăшĕсене тумаллине, выльăх айне сарма тата хире кăларма торф мĕн чухлĕ хатĕрлемеллине, удобренисене пусăна мĕн чухлĕ кăлармаллине тата вĕсене бригада хăçан хире турттармаллине те пăхнă.

Эпир уйрăмах удобренисене хире кăларас ĕç çине тимлĕ пăхатпăр. Чăваш АССР-ĕнчи Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра, ытти пирĕн колхозсенчи пекех, тислĕке çуна çулĕпе выльăх картишĕсенчен куллен тÿрех хире кăларса тăраççĕ, çакна тума кашни бригадăра ятарласа çынсем, лашасем уйăраççĕ. Выльăх картишĕсем патĕнче тислĕк çуркуннехи шыв-шур вăхăтĕнче кăна юлать, çавăн пекех тата ăна тырпул пухса кĕртнĕ вăхăтра кăлармаççĕ.

Чăваш АССР-ĕнчи Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра тислĕк тата тислĕк шĕвекĕ хатĕрлемелли плана тултарнăшăн, вĕсене лайăх сыхласа усранăшăн çулталăк вĕçĕнче ĕçкунĕсем хушса параççĕ: фермăсен заведующийĕсене 15-шер ĕçкунĕ, производствăллă бригадăсен бригадирĕсене 30 ĕçкунĕ.

Горький облаçĕнчи Городец районĕнчи «Красный маяк» колхозра тислĕк хатĕрлемелли плана ирттерсе тултарнăшăн ферма заведующине 3 процент, выльăх пăхакансене 5 процент таран ĕçкунĕ хушса тÿлеççĕ.

Калинин облаçĕнчи Кашин районĕнчи «Красный путиловец» колхозра колхозника хăй килĕнчи выльăхĕнчен пулнă тислĕке колхоза панă кашни лавăшĕн 0,5 ĕçкунĕ, Калинин облаçĕнчи Краснохолмск районĕнчи «Красный коллективист» колхозра—1,75 ĕçкунĕ параççĕ. Кĕл тата кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнăшăн та ĕçкунĕсем тÿлеççĕ. Çав «Красный маяк» колхозрах пĕр центнер кĕл пухса панăшăн 2 ĕçкунĕ параççĕ.

Тислĕке тĕрĕс сыхласа усрамалла

Эпир хамăр практикăран çакна куратпăр: хире кăларакан тислĕкрен пысăк та çирĕп купасем (штабельсем) тумалла, вара вăл лайăх сыхланса усранать. Купа сарлакăшĕ 3,5—4 метр, çÿлĕшĕ—1,5—2 метр, тăршшĕ—8—10 метр пулмалла.

Удобренисем ытларах пулччăр тесе, нумай колхозсем тислĕке купана торфпа сийĕн-сийĕн хураççĕ. Мускав облаçĕнчи Коммунистически районĕнчи Димитров ячĕпе тăракан колхозра кĕркуннехи тата хĕллехи вăхăтра торфа уй-хире тислĕкпе пĕр вăхăтрах кăлараççĕ. Купа айне 0,5 метр хулăмăш торф сараççĕ, ун çине 0,5 метр хулăмăш тислĕк хураççĕ, çавăн пек тислĕк купине туса пĕтеричченех хураççĕ. Купана лайăх хытараççĕ. Тислĕк хĕрсе ăшăнма пуçласан (пĕр 10 кунтан), купана иккĕмĕш хут лашасемпе таптатса хытараççĕ. Унтан купана торфпа витеççĕ.

Владимир облаçĕнчи Камешково районĕнчи «Завет Ленина» колхозра тислĕкпе торфа пĕтĕмпех компостсем туса усă кураççĕ.

Тислĕк шĕвекĕ ытларах пухмалла

Мускав облаçĕнчи Коммунистически районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхозра тислĕк шĕвекĕ пухма 9 вырăн тунă. Тислĕк шĕвекĕпе компостсем тунă çĕрте усă кураççĕ. 1951 çулта кунта тĕрлĕ япаласенчен (хăлчăк, арпа, улăм т. ыт. те) пухса, вĕсене тислĕк шĕвекĕпе шÿтерсе, 500 тонна ытла компост хатĕрленĕ. Торфпа тислĕк шĕвекĕнчен тунă компостпа анлă усă кураççĕ. Çулла тислĕк шĕвекĕпе пахча çимĕçсене апат параççĕ. Чăваш АССР-ĕнчи Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра тислĕк шĕвекĕ пухмалли вырăнсем кашни выльăх картишĕнчех пур, çулталăкра 200—300 тонна тислĕк шĕвекĕ пухаççĕ. Хĕлле унпа тислĕк купиcене сапаççĕ, çулла вара кĕрхи тулла, пахча çимĕçсене, техникăллă культурăсене апат параççĕ.

Горький облаçĕнчи Городец районĕнчи «Красный маяк» колхоз çулталăкра 400—500 тонна таран тислĕк шĕвекĕ пухса хатĕрлет. Тислĕк шĕвекне, фекалие турттарма, вĕсемпе усă курма ку колхозра пневматически автоцистерна пур. Тислĕк шĕвекĕпе, фекалипе компостсем тума, пахча çимĕçсене апат пама усă кураççĕ.

Тислĕк шĕвекне пухас ĕçе организацилени санитари тĕлĕшĕнчен те пысăк вырăн йышăнать. Канализаци çук е вăл йĕркеллĕ мар фермăсенче тата тислĕк шĕвекĕ пухмалли вырăнсем туман колхозсенче выльăх-чĕрлĕхе санитари тĕлĕшĕнчен лайăх пăхса усрама май килмест.

Тислĕк пухмалли вырăнсем (жижесборники) час-часах çулталăкра пухăнакан мĕнпур тислĕк шĕвекне вырнаçтарма пултараймаççĕ. Хĕлле ăна хире турттарса кăларма юрамасть, мĕншĕн тесен çийĕнчех тăпрапа хутăштармасан унăн усси нумай чакать. Çавăнпа та ĕнтĕ тислĕк шĕвекĕпе компостсем тума ытларах усă курмалла (торфпа тислĕк шĕвекĕнчен, улăмпа тислĕк шĕвекĕнчен тăвакан компостсем т. ыт. те).

Çавăн пек туни тислĕк шĕвекĕпе кирлĕ пек усă курма пулăшать, торф пахалăхне лайăхлатать, тислĕк шĕвекĕ пухмалли вырăнсен пысăккăшне 3—5 хут чакарма май парать.

Уй-хирте торфпа ытларах усă курмалла

Торфа удобрени валли Владимир облаçĕнчи Камешково районĕнчи «Завет Ленина» колхоз нумай хатĕрлет. Торф айлăм вырăнта. Колхозниксем ăна хĕлле карьерсем туса кăлараççĕ, вĕсем траншея пекех: сарлакăшĕ 3 метр, торф хулăмăшне кура тарăнăшĕ 1,5 метртан пуçласа 1,75 метра çити.

Уй-хир бригадисем пурте торф хатĕрлеççĕ. Ку ĕçе тума кашни бригадăран колхозниксен ушкăнне уйăрнă, вĕсене турттăм вăйĕ, кирлĕ инвентарь çирĕплетсе панă.

Удобрени валли торф кăларас ĕçе Белоруссири малта пыракан колхозсенчен те вĕренме пулать. Глубокое районĕнчи Молотов ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕнче торфа çарансенчи шурлăха типĕтнĕ вăхăтра кăлараççĕ. Ку колхоз пĕтĕм республикăра пысăк тухăçлă тĕштырă тата йĕтĕн туса илнипе чапа тухнă. Шурлăхсене майпа июнь уйăхĕсенче типĕтеççĕ, ун чухне шурлăхсенче шыв сахалтарах. Уй-хир бригадисем пурте торф хатĕрлеççĕ. Вăхăтра кăларнă торф тăпрана хуриччен лайăх типшĕрме ĕлкĕрет, унти йÿçĕклĕх те нумай чакать.

Минск районĕнчи Гастелло ячĕпе тăракан колхозра удобрени валли торфа 25 çынтан тăракан ушкăн хатĕрлет. 1951 çулта вăл икĕ уйăха яхăн вăхăт хушшинче 5.000 тонна яхăн торф кăларнă. Чылай пысăк пайне кĕрхи тырăсем акнă вырăна, ыттине çуртри акмалли вырăна кăларнă.

Полоцк облаçĕнчи Глубокое районĕнче торф кăларасси çулсерен çапла ÿссе пынă (тоннăпа):

Çулсем	План	Тултарнă
1948	1.530	1.773
1949	5.000	25.000
1950	25.000	63.000
1951	112.000	263.123

Глубокое районĕнчи колхозсем 1952 çулта пухса кĕртмелли кĕрхи тырăсем акнă мĕнпур лаптăк çине кашни гектар пуçне вăтам шутпа 13,6-шар тонна торф кăларнă. Типĕтнĕ хыççăн кунта торфа тислĕкпе компост тăваççĕ. Пĕр пай тислĕк çумне икĕ пайран пуçласа виçĕ пая çити торф хушаççĕ.

Типĕтмен шурлăхсенче торфа карьерсенче кăна кăлараççĕ. Карьера ăсталла чавса каймаллине вешкăсемпе кăтартса параççĕ. Палăртнă вырăна (12—15 метр сарлакăш) тĕмлĕ йывăççенчен, тункатасемпе тымарсенчен тасатаççĕ. Кун пек тусан карьер чавма, кăларакан торфа купаласа пыма, лашасемпе сÿреме лайăх пулать. Шыв хăй тĕллĕн юхса кайма пултартăр тесе, карьера шурлăхри шыва йышăнакан çывăх тĕлтен чавма тытăнмалла.

Карьерсене 2 метр сарлакăш, тарăнăшне мĕн май килнĕ таран тăваççĕ, анчах 0,7 метртан кая мар. Тĕп карьер урлă май тăта карьерсем чаваççĕ (40—50 метр тăршшĕ). Тĕп карьерпа ытти карьерсене хире-хирĕçле туни шыва юхтарса яма пулăшать.

Бобруйск, Минск облаçĕсенчи вуншар колхозсем торфа удобренилĕх пĕтĕмпех сийĕн-сийĕн çиелтен кăларса пырас меслет çине куçнă. Бобруйск районĕнчи Дзержинский ячĕпе тăракан колхоз çавăн пек меслетпе 1950 çулхи çулла 20 пин тоннăна яхăн паха торф хатĕрленĕ. Çавăн пек торфра нÿрĕ 85—90 процентран 60—65 процента çити чакать, ку ĕнтĕ торфа турттарса кăларма тухакан тăкака 3—4 хут чакарать.

Торфа сийĕн-сийĕн çиелтен кăларса пынă чухне вăл тип̆ĕ те вĕтĕ пулать, компостсем тума, выльăх айне сарма, тăпрана витме (мульчировани) аван. Çавăн пек меслетпе кăларсан, торф шурлăхĕсенчен çарансемпе кĕтÿ çÿретмелли, ялхуçалăх культурисем акмалли вырăнсем тума пулать.

Торфа сийĕн-сийĕн çиелтен кăларас ĕçе Горький облаçĕнчи Городец районĕнчи 12-летия Октября ячĕпе тăракан колхозра лайăх организациленĕ. Торфа типĕтнĕ шурлăхра трактор плугĕпе сухаласа кăларса хатĕрлеççĕ.

Сухаланă сие дисклă сÿресемпе икĕ-виçĕ хут сÿрелеççĕ, унтан вĕтелнĕ торф тĕпренчĕкĕсене лашапа ĕçлекен кĕреçепе пухаççĕ. Çавăн пек кĕреçепе кунне торф тĕпренчĕкне 50 тонна пухма пулать.

Ĕçе тĕрĕс организациленипе пула, колхоз торфлă вырăнти кашни гектартан пин тоннăна çити вĕтĕ те типшĕрнĕ торф пухса илет.

Минск районĕнчи Шверник ячĕпе тăракан колхозра та торф кăларас ĕçе лайăх организациленĕ. Торфа сийĕн-сийĕн çиелтен майпа кăларма торф шурлăхĕнче кашни уй-хир бригадине участоксем çирĕплетсе панă. Çав участоксене типĕтме траншейăсене тĕплĕ тунă. Çиелти сие пилĕк корпуслă трактор плугĕпе 20—25 сантиметр тарăнăш сухалаççĕ. Унтан тракторпа ĕçлекен дисклă сÿрепе икĕ хут, ун хыççăн лашапа ĕçлекен пружиналлă сÿрепе сÿрелеççĕ. Типшĕрнĕ торф тĕпренчĕкĕсене лашапа пухаççĕ, ку тĕлĕшпе кашни бригадăрах лашапа пухмалли хатĕр пур.

Бобруйск облаçĕнчи Глусск МТС-ĕ (директорĕ Геллер юлташ) пĕрлешсе пысăкланнă 16 колхозра ĕçлет. Вăл колхозсене торфлă вырăнсене типĕтес ĕçе механизацилеме пулăшать, канавсем чавакан «КМ-900», «КМ-1.000» йышши механизмсемпе усă курать.

1951 çулта çав механизмсемпе 288 километр тăршшĕ траншейăсемпе канавсем чавса панă, çавна май кĕске вăхăтрах торфлă вырăнсене 1.500 гектар ытла типĕтнĕ.

Глусск МТС-ĕ 1951 çулта ĕçе механизацилесе тата сийĕн-сийĕн çиелтен кăларса, Сталин ячĕпе тăракан колхоза кăна 8.000 тонна торф тĕпренчĕкĕ хатĕрлесе панă, торф тĕпренчĕкне колхозра выльăх айне сараççĕ, унтан тислĕкпе тата фекалипе компостсем тăваççĕ.

1951 çулта Глусск МТС-ĕ хăйĕн транспорчĕпе колхоз хирĕсене 4.000 тонна ытла торф кăларса панă.

Симĕс удобренисем валли люпин ытларах акма тытăнмалла

Киев облаçĕнчи Бровары районĕнчи Хрущев ячĕпе тăракан колхоз юлашки çулсенче симĕс удобрени валли люпин чылай ытларах акма тытăннă. Украинăри вăрманлă, айлăмлă вырăнсенчи çăмăл тăпрасем çинче çакă вăл питех те лайăх результатсем парать.

Колхозра симĕс удобрени панă (люпин акса сухаланă) вырăнсенче кĕрхи тулă тухăçлăхĕ вăтам шутпа кашни гектартан 24-шар центнер пулнă. Колхоз 1947 çулта 50 гектар люпин акнă пулсан, 1951 çулта вăл лаптăка 850 гектара çитернĕ.

Хрущев ячĕпе тăракан колхоз пысăк тухăçлă люпин вăрлăхĕ—кашни гектартан 26-шар центнер туса илет. Çакна вăрлăха яровизаци туни, ир акни пулăшать. Вăрлăхлăх люпина комбайнпа пухса кĕртеççĕ. Люпин вăрлăхне сыхласа усрама йывăртарах пулнă пирки Хрущев ячĕпе тăракан колхоз тин çеç пухса кĕнĕ люпин вăрлăхне хăмăл çине акассине анлăн туса пырать. Вăрлăха пухса кĕртнĕ хыççăн темиçе кун иртсен вăрлăха сывлăшпа ăшăтаççĕ, кайран çитес çул çуртри акма палăртнă пусăсене акса хăвараççĕ. Люпин кĕркуннеччен лайăх аталанать (симĕс масса кашни гектар пуçне 14—16 тонна çитет), ăна кĕрхи çĕртме тунă чухне сухаласа пăрахаççĕ. 1951 çулта Хрущев ячĕпе тăракан колхоз хăмăл çине 480 гектар люпин акнă.

Минск районĕнчи Гастелло ячĕпе тăракан тата «Большевик» колхозсенче юлашки виçĕ çул хушшинче çулсерен çĕртме пуссин çур пайĕ çине 150-шар гектар симĕс удобрени валли люпин акса хăвараççĕ.

Гастелло ячĕпе тăракан колхоз çулсерен вăрлăх тума люпина лайăх сухаласа çемçетнĕ, фосфорит çăнăхĕ сапнă участоксене акса хăварать.

Вăрлăхлăх люпина кунта комбайнпа пухса кĕртеççĕ. Лайăх типĕтнĕ люпин вăрлăхне ятарласа тунă пÿлĕмсенче 0,5—0,8 метр хулăмăш сарса хурса усраççĕ.

Люпин вăрлăхне усрасси—кăткăс ĕç, ун çине тимлĕ пăхмалла. Люпин вăрлăхне эрнере пĕрререн кая мар пăтраштармалла, типĕ çанталăкра пÿлĕме уçăлтармалла.

Люпин вăрлăхне туранă типĕ улăмпа хутăш усрани лайăх пулни палăрать. Гастелло ячĕпе тăракан колхоз кашни колхозах 1951/1952 çулсенчи хĕллехи вăхăтра çакăн пек опытсем туса пăхма сĕнет: люпин вăрлăхне усрама кашни 2 центнер вăрлăх пуçне 1 центнер туранă улăм (е ытларах е сахалрах) илсе хутăштармалла.

Гастелло ячĕпе тăракан колхоз 1951 çулта люпин вăрлăхне 80 тонна пухса кĕртнĕ.

Йÿçĕк тăпрасене известькăласси—колхозсем умĕнче тăракан чи кирлĕ задача

Тăпрана известькăлани йÿçĕк тăпрасене йăлтах улăштарать. Тăпра çине известь сапни йÿçĕклĕхе чакарать е пĕтĕмпех пĕтерет, çапла вара ÿсентăрансене çитĕнме тата усăллă микроорганизмсене пурăнма лайăхрах условисем туса парать. Çакăн хыççăн курăксен тухăçлăхĕ чылай ÿсет, кайран акакан ытти культурăсем те вăйлă пулаççĕ.

Минск районĕнчи Гастелло ячĕпе тăракан колхоз, тăпрана торфотуфсемпе известькăланă май тата агротехника правилисене тĕрĕс пурнăçланипе пула, тĕштырăсен тухăçлăхне чылай ÿстернĕ: 1948 çулта кашни гектартан 9,1 центнер тырă туса илнĕ пулсан, 1951 çулта кашни гектартан 17-шер центнер таран тĕштырă пухса кĕртнĕ.

Эпир пур колхозсене те, йÿçĕк тăпрасем пулсан, йÿçĕк тăпрана известькăлама хĕллехи вăхăтра известьлă материалсем хатĕрлеме сĕнетпĕр. Çак шутпа чи малтанах çывăхра тĕл пулакан, вĕтетме кирлĕ мар известьлă материалсене—туфсене, çутçанталăкра тĕл пулакан доломит çăнăхне, торфотуфсене тата ыттисене те, çавăн пекех известьлă каяшсене, дефекационнăй пылчăка, сланец кĕлне тата урăххисене те хатĕрлеме сĕнетпĕр.

Хытă известнияксем тĕл пулаççĕ пулсан, вĕсене колхозсенче «ДМК-01» дробилкăсемпе вĕтетме пулать.

Известь хатĕрлес тата турттарса кăларас ĕçе тума хĕл вăхăчĕпе усă курни питĕ кирлĕ. Эпир йÿçĕк тăпра пур колхоз председателĕсемпе агрономĕсене 1952 çулхи çуркунне нумай çул ÿсекен курăксем акмалли вырăнсенче 80—100 гектар та пулин тăпрана известькăлама сĕнетпĕр. Кашни гектар пуçне 2—4-шар тоннăна яхăн известь кирлĕ пулать (çăмăл тăпрасем çинче сахалрах, йывăр тăпрасем çинче—нумайрах). Мĕн чухлĕ известь кирлĕ пулассине агрохимически лаборатори тăпрана анализ тунă хыççăн кăтартса пама пултарать. Çÿлте кăтартнă нормăпа извĕçе чи малтанах кĕрхи тырăсем акмалли уйсенче çĕртме тунă чухне тата çуртрисене курăксемпе пĕрле акмалли вырăнсенче—кĕрхи çĕртме тунă чухне кăлараççĕ.

1952 çулта колхозсем извĕçе вăхăтлă нормăпа (гектар пуçне 2—4 тонна) кăларнисĕр пуçне, нормăна пĕчĕклетсе (гектар пуçне 1—1,5 тонна) культиваци тунă чухне кăларма тата курăк акнă чухне ретсене сапма пĕчĕк норма (гектар пуçне 1—2 центнер) илме пултараççĕ. Кунсăр пуçне курăк акнă лаптăксем çинче извĕçе тăпра çине гектар пуçне 2—3 тонна сапма пулать.

Пĕчĕклетнĕ тата пĕчĕк нормăпа известь кăларни—çĕнĕ меслет, вăл опыт производствăра пысăк вырăн йышăнать.

* * *

Пирĕн колхозсен темиçе çулхи ĕç опытне шута илсе, эпир кашни колхозрах çакăн пек чи кирлĕ ĕçсене туса ирттерме сĕнетпĕр:

вырăнти удобренисем пухса хатĕрлемелли тата усă курмалли план тумалла, кашни выльăх-чĕрлĕх фермине тата уй-хир бригадине задани памалла, вăл заданисене пĕтĕмĕшпех пурнăçламалла;

колхозниксен килĕсенчи выльăх-чĕрлĕхрен пулакан тислĕке колхоз уй-хирне ытларах кăлармалла;

тислĕке тĕрĕс сыхласа усрассине йĕркелемелле; çак шутпа мĕнпур навозохранилищĕсене юсамалла, выльăх-чĕрлĕх картишĕсен çывăхĕнче тислĕк хума ятарласа площадкăсем тумалла;

тислĕке пысăк купасене, лайăх таптаса купаламалла, айне торф е улăм сармалла, купасене çиелтен торфпа е тăпрапа витмелле;

колхозсенче тислĕк шĕвекĕ пухмалли приемниксене юсамалла, тислĕк шĕвекне пĕтĕмĕшпех пухса усрамалла, унпа компост тума тата хăй тĕллĕн кĕрхи тырăсен калчине çуркунне апат пама усă курмалла;

торф тупăнакан вырăнсем пулсан, колхозсенче удобрени валли массăллăн торф хатĕрлессине организацилемелле, çак ĕçе мелиораци ĕçĕсемпе çыхăнтармалла, торф кăларнă вырăнсемпе шурлăха типĕтмелли канавсем вырăнне усă курма май пултăр;

колхозсенче тата колхозниксен килĕсенче кĕл тата кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухассине анлăн йĕркелемелле, çак хаклă удобренисене тĕрĕс упраса усă курмалла. Кĕрхи çĕртме тунă вырăнсене çуркунне сухаланă чухне çурхи тĕштырă культурисем акмалли вырăнсенче лайăх çĕрнĕ тислĕк кăлармалла; хĕл вăçиччен пухнă тислĕк шĕвекне, кĕле тата кайăк-кĕшĕк тислĕкне чи малтанах кĕрхи тырăсемпе нумай çул ÿсекен курăксен калчине апат пама тата çарансене лайăхлатма усă курмалла;

Юлашки 4-мĕш страницăра.

Вырăнти удобренисем—ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне ÿстермелли хăватлă резерв

Юлашки. Пуçламăшĕ 3-мĕш страницăра.

кĕрхи тырăсен калчине апат пама фекали массипчен торфпа тата çĕрĕк тăприпе пĕрле компост тумалла;

çăмăх сĕвĕрлĕ суперфосфатпа органически тата минераллă удобренисене хутăштарса хатĕрленĕ чухне тата органически—минераллă удобренисенчен пĕрчĕлĕтнĕ удобренисем тунă чухне усă курмалла;

пĕрле хутăштарнă органически тата минераллă удобренисене культиваци тунă чухне сапмалла, çавăн пекех çĕрулми лартнă, пахча çимĕçсене кок-сагыз тата ытти культурăсем акнă чухне йăрансене, шăтăксене сапассине анлă организацилемелле;

кашни колхозрах компостсем—торфпа тислĕк шĕвекĕнчен, торфпа фекалиренчен тата ытти компостсем тăвассине пĕркелемелле, çакна валли мĕнпур каяшсемпе, удобренисемпе усă курмалла;

известлăлă туфсене тата ытти навĕслĕ материалсене хатĕрлесе, уя турттарса кăлармалла, вĕсене чи малтанах нумай çул ÿсекен курăксен акакан уйсене кăлармалла;

люпин вăрăлăхне тĕрĕс упраса усрамалла, унăн вăрăлăхне май килнĕ таран ытларах ĕрчетмелле, люпин акакан лаптăксене пĕр вĕçĕмсĕр ÿстерсе пымалла;

уй-хире удобренисем турттарса кăларма колхозниксенчен ялан̆лăха группăсем тумалла, вĕсене кирлĕ чухлĕ ĕç выльăхĕ тата транспорт хатĕрĕсем çирĕплетсе памалла.

Кашни колхозрах 1952 çулта вăйлă тырпул туса илмелле тăвар!

Хамăрăн мĕнпур резервсене пысăк тухăçлă тырпул туса илме мобилизацилер, кашни колхозрах вырăнти удобренисен пысăк ресурсĕсемпе туллин усă курар!

С. КОРОТКОВ, Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ, Социализмлă Ĕç Геройĕ; **В. ЗАЙЦЕВ**, Чăваш АССР-ĕнчи Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз председателĕ, Социализмлă Ĕç Геройĕ; **И. ЗОРИН**, Горький облаçĕнчи Шатки районĕнчи «Власть Советов» колхоз председателĕ; **Н. ЖЕЛЕЗОВ**, Горький облаçĕнчи Городец районĕнчи «Красный маяк» колхоз председателĕ; **И. КОВБАСНИНСКИЙ**, Киев облаçĕнчи Бровары районĕнчи Хрущев ячĕпе тăракан колхоз председателĕ; **А. БАРДЕЕВА**, Мускав облаçĕнчи Коммунистически районти Димитров ячĕпе тăракан колхозри уй-хир бригадин бригадирĕ, РСФСР Верховнăй Совет депутачĕ; **П. ПРУСОВА**, Мускав облаçĕнчи Коммунистически районти Сталин ячĕпе тăракан колхозри уй-хир бригадин бригадирĕ; **В. КУЗНЕЦОВ**, Владимир облаçĕнчи Камешково районĕнчи «Завет Ленина» колхоз председателĕ; **М. ВОЛОДЬКО**, Минск облаçĕнчи Минск районĕнчи Гастелло ячĕпе тăракан колхоз председателĕ; **Ф. РАЧКОВСКИЙ**, Минск облаçĕнчи Минск районĕнчи «Большевик» колхоз председателĕ; **П. ТРОПАШКО**, Минск облаçĕнчи Минск районĕнчи ялхуçалăх пайĕн главнăй агрономĕ; **Л. БАРАНОВИЧ**, БССР-ĕнчи Полоцк облаçĕнчи Глубокое районĕнчи ялхуçалăх пайĕн главнăй агрономĕ; **В. КАПИТОНОВА**, БССР-ĕнчи Полоцк облаçĕнчи Глубокое районĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхозри комсомол организацин секретарĕ; **Б. ГЕЛЛЕР**, БССР-ĕнчи Бобруйск облаçĕнчи Глусск МТС директорĕ; **А. БЕЛОВ**, Калинин облаçĕнчи Кашин районĕнчи «Красный путиловец» колхоз председателĕ; **А. БЕЛЫХ**, Киров облаçĕнчи Котельнич районĕнчи «Заветы Ильича» колхоз председателĕ; **А. МОГУНОВ**, Калинин облаçĕнчи Красный Холм районĕнчи «Коллективный труд» колхоз председателĕ; **Ю. КИРЕЕВ**, Мускав облаçĕнчи Коммунистически районти улăх-çаран мелиораци станцийĕн директорĕ.

«СОЦИАЛИСТИЧЕСКОЕ ЗЕМЛЕДЕЛИЕ» ХАÇАТ, 1952 çулхи январĕн 9-мĕшĕ.

Корейăри ĕçсем

ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНĂЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, январĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн главнăй командованийĕ паян çапла пĕлтернĕ: Корея Халăх çарĕн соединенийĕсем Китай халăх добровольцĕсен чаçĕсемпе пĕрле Америкăпа Англи интервенчĕсене тата Ли Сын Ман çарĕсене хирĕç халиччен̆хи вырăнсенчех оборонăра тăрса çапăçаççĕ.

Ĕнер хĕвелтухăçĕнчи фронтăн уйрăм участокĕсенче çапăçусем пулса иртнĕ. Тăшман темиçе хутчен те атакăсем тунă. Çав атакăсене Халăх çарĕн чаçĕсем ăнăçлă сире-сире янă.

Вăтаçĕрти тата хĕвеланăçĕнчи фронтсенчи уйрăм участоксенче çапăçусем пынă.

Январĕн 10-мĕшĕнче Халăх çарĕн зенитнăй чаçĕсем тата самолетсене хирĕç çапăçакан салтакĕсен отрячĕсем тăшманăн 4 самолетне персе ÿкернĕ, унччен çав самолетсем, ытти самолетсемпе пĕрле, Нампхо, Аньчжу тата Вонсан районĕсенчи мирлĕ халăха тапăннă, бомбăсем нумай пăрахнă тата пулеметсемпе пенĕ пулнă.

Трумэн малашне те васкасах хĕçпăшал хатĕрлесшĕн

ВАШИНГТОН, январĕн 9-мĕшĕ (ТАСС). США президенчĕ Трумэн «çĕршыв пурнăçĕ çинчен» конгреса послани янă. Послани пуçламăшĕнче Трумэн: «çак çул президент суйламалли çулталăк пулать, пирĕн пурнăçра политика ытти чухнехинчен пысăкрах вырăнта тăмалли çулталăк пулать», тесе аса илтернĕ.

Посланире мир çинчен юриех суйса сÿпĕлтетни чылай вырăн йышăннă, унта Америкăн тулашри политикин тĕллевĕ мирлĕ пурнăçшăн тăрăшасси пулать тесе калама пăхнă. Çавăн пек калани вăл суя сăмах кăна пулни посланире мĕн çинчен çырнинчен, пуринчен малтан Трумэн мĕн тума чĕннинчен курăнса тăрать.

Çар ĕçĕн питĕ пысăк программине пурнăçласа пынине Трумэн тĕрĕс ĕç пек кăтартма хăтланнă. Вăл, яланхи пекех, США-на хирĕç «агрессиллĕ ĕç» тăвас хăрушлăх пур, тесе каланă. Çавăн пек каланине çирĕплетме вăл нимĕнле тĕслĕх те, нимĕнле сăлтав та илсе кăтартман.

Мир çинчен сÿпĕлтетнĕ хыççăн, Америка президенчĕ США çитĕнĕвĕсен шутне Америкăн Корейăри агрессине, Японипе тунă сепаратнăй «мирлĕ договора», Лăпкă океан тăрăхĕнчи çĕршывсен агрессиллĕ блокне тунине, Хĕвеланăç Европăри çĕршывсене хĕçпăшаллантарнине тата ытти çавăн пек ĕçсене кĕртет. Посланире США васкасах хĕçпăшал нумай хатĕрленине тем тĕрлĕ те мухтанă. Çавăнпа пĕрлех посланире Америка, Англи тата Франци ООН Генеральнăй Ассамблейин Парижри сессине тăратнă сĕнĕве ырланă. Виçĕ державăн çак сĕнĕвне «хĕçпăшалсăрланасси çинчен» тесе ят панă, унта хĕçпăшалсене чакарма палăртман. Ку вăл виçĕ держава, икĕпитленсе маневрсем туса, хĕçпăшалсене чакарас вырăнне, уйрăм çĕршывсене васкасах нумай хĕçпăшал хатĕрлеме çул уçса пама хăтланни пулнă.

Асăннă сĕнĕве мĕншĕн тăратни Америка президенчĕ янă посланиренех курăнать.

«Юлашки çулталăк хушшинче эпир хамăрăн хĕçпăшаллă вăйсен ретне миллион çын ытла, арçынсемпе хĕрарăмсене, илтĕмĕр. Халĕхи вăхăтра хĕçпăшаллă вăйсен пĕтĕм йышĕнче 3,5 миллион çынна яхăн», тенĕ Трумэн.

Трумэн посланийĕнчи хăшпĕр сведенисенчен Хĕвеланăçĕнчи çĕршывсем васкасах хĕçпăшал питĕ нумай хатĕрленĕ пирки пысăк йывăрлăхсем тухса тăни курăнать. Трумэн йышăннă тăрăх, васкасах хĕçпăшалланни «экономика енĕпе пысăк ыйтусем тухса тăрасси патне» илсе пынă. Хĕвеланăç Европăра укçа пĕрмаях йÿнелсе пырать. Америка союзникĕсене малалла «вăйлатса» пырас ĕçре хăрушлăх тухса тăнă.

Çывăх Хĕвелтухăçĕнчи тата Вăтаçĕр Хĕвелтухăçĕнчи лару-тăрăва хакласа, Трумэн çав район «пăлханма тытăннине» палăртать. Трумэн Америкăн Инçет Хĕвелтухăçĕнчи политики ăнăçсăр пулассинчен шикленет.

Трумэн «союзниксем» тата «хăшпĕр çынсем» малашне халиччен̆хинчен «сахалтарах вăй-хал хурса тăрăшма» шутланăшăн хăй пăшăрханнине палăртнă. Вĕсене Трумэн «ÿпкелешме тата нăйкăшма юрамасть», тесе асăрхаттарнă.

Çĕршыври задачăсем çинчен каласа, Трумэн каллех: пĕрремĕш задача вăл хĕçпăшалланмалли программăна пурнăçлассишĕн «пĕтĕм вăй-хала хурса тăрăшасси» пулать, тенĕ.

«Оборона нушисем валли хурçă, алюмини, пăхăр, никель тата ытти материалсем нумай кирлĕ пулаççĕ. Çакă вара гражданcене кирлĕ хăшпĕр таварсене сахалтарах туса хатĕрлемеллине пĕлтерет», тенĕ Трумэн.

Унтан Трумэн çĕршывра «укçа-тенкĕ йÿнелессине сирсе яма» чĕннĕ.

Посланире çапла асăрхаттарнă: правительство малашне те, халиччен̆хи пекех, ĕç укçине ÿстерме чармалли политика тытса пырать, тенĕ. Çапла вара, апатсимĕçпе япаласем хăвăрт хакланса пыраççĕ пулин те, ĕç укçине ÿстерме чараççĕ. Правительство программине пурнăçлама укçа-тенкĕ нумай пухмалла, çакă вăл «çывăхри çулсенче налогсем пысăк пулассине пĕлтерет», тенĕ посланире.

Послание вĕçлес умĕн Трумэн США-н хальхи политикине критикăлакансене хирĕç хытă каланă. «Эпир тĕрĕс çулран пăраннă, эпир хамăр мĕн тунине те пĕлместпĕр, эпир пурпĕрех поражени тÿсетпĕр тесе кăшкăракан çынсене, шикленсе ÿкнĕ, нимĕн тума аптранă çынсене, çав çынсен тăста çитиччен̆ех тăсăлакан ушкăнне эпир кашни кун куратпăр», тенĕ вăл.

Тĕнчери лару-тăру

АМЕРИКĂН ВĂРÇĂ ХАТĔРЛЕМЕЛЛИ ПЛАНĔСЕНЕ ТĂРĂ ШЫВ ÇИНЕ КĂЛАРНИ

ООН Генеральнăй Ассамблейин улттăмĕш сессийĕнче Америкăн «коллективлă мерăсем» текен программине сÿтсе явасси вĕçленнĕ.

1950 çулхи ноябрь уйăхĕнче, Генеральнăй Ассамблейăн пиллĕкмĕш сессийĕнче, Америкăпа Англи майлă тăракансен ытларахăшĕ «коллективлă мерăсем йышăнас тĕлĕшпе ĕçлекен комитет» тунăччĕ. Улттăмĕш сессире çав комитет доклад тăратнă, унта çар ĕçĕсен исполнительнăй органне тума сĕннĕ. Ку вара «коллективлă мерăсене» пурнăçлассине оперативлă ертсе пыракан тĕп орган шутланмалла пулнă. Докладра «коллективлă мерăсене» агрессора хирĕç йышăнас пек кăтартма пăхнă.

Политика комитечĕн ларăвĕнче США тата вĕсене пăхăнса тăракан тепĕр 10 çĕршыв комитет докладне ырлама сĕнсе резолюци тăратнă. Ку резолюцире кашни çĕршыв хĕçпăшаллă вăйĕнчен çар чаçĕсем уйăрма, вĕсене «ООН аллине» пама сĕннĕ. Америка империалисчĕсен планĕсем тăрăх, «ООН çар чаçĕсене» вăрçă тухас пулсан, Ассамблея уйăрнă «çар ĕçĕсен исполнительнăй органĕ» аллине, çăннипе—США аллине памалла пулнă. Вунпĕр çĕршыв тăратнă резолюцире хăш çĕршыва агрессор тесе шутлас пирки Генеральнăй Ассамблейăра делегацисен ытларахăшĕ сасăланипе решени йышăнмалли йĕрке тума палăртнă. Çав йĕрке тăрăх ООН-ри Америка майлă тăракансен ытларахăшĕ США-па килĕшсе пурăнман кирек хăш çĕршыва хирĕç те вăрçă пуçлама пултарнă пулĕччĕ.

Комитет докладне тата 11 çĕршыв резолюцине улттăмĕш сессире пур енчен те сÿтсе явнă, дискусси вăйлă пулнă. Çав документсене СССР, УССР, БССР, Чехословаки, Польша тата ытти хăшпĕр çĕршывсен представителĕсем тĕплĕ критикăланă.

Совет делегацийĕн пуçлăхĕ А. Я. Вышинский хăйĕн сăмахĕсенче ООН-ри агрессиллĕ ушкăнăн çĕнĕ планĕсене пĕтĕмпех тăрă шыв çине кăларнă. Çав планcене «коллективлă мерăсем йышăнас тĕлĕшпе ĕçлекен комитет» докладĕнче тата 11 çĕршыв резолюцийĕнче питех те йĕрĕнмелле сăмахсемпе, мир пирки сÿпĕлтетнипе пытарма хăтланнă пулнă.

А. Я. Вышинский çакна лайăх кăтартса панă: «коллективлă мерăсем» текен программăн шухăшĕ Америка майлă тăракансен ытларахăшĕн ирĕкĕпе агрессор тесе шутлама йышăннă государствăна хирĕç вăрçă организацилесси пулать. Çав программа вăл—мире юратакан халăхсене хирĕç вăрçă хатĕрлемелли программа. Ку программăн тĕллевĕ Америка монополийĕсем пĕтĕм тĕнчипех пуç пулса тăрассине пурнăçласси пулнă.

«Коллективлă мерăсем йышăнас тĕлĕшпе ĕçлекен комитетăн» докладне Америка сĕнĕвĕсене кĕртнĕ. Америка сĕнĕвĕсемпе 11 çĕршыв резолюцийĕ ООН Уставне хирĕç пыраççĕ. Устав тăрăх, сăмахран, çар штабĕн комитечĕ тунă, çав комитет пур, вăл Хăрушсăрлăх Советне пăхăнса тăрать. Уставра каланă тăрăх, агрессора хирĕç вăрçă ĕçĕсем пуçласси çинчен Хăрушсăрлăх Совечĕн яланхи 5 членĕн пĕр саслă пулса решени йышăнмалла тата çавăн пек тума сахалтан та советăн вăхăтлăх членĕсенчен иккĕшĕ килĕшмелле.

ООН Уставĕнче палăртнă çак йĕркене Америкăпа Англи представителĕсен ытларахăшĕ аркатса тăкма шут тытнă. Вĕсем çăннипе Хăрушсăрлăх Советне салатса ярасшăн пулнă. ООН Уставĕ тăрăх тĕнчере мирлĕ пурнăç тата хăрушсăрлăх тăвас пирки тĕп ответлăха Хăрушсăрлăх Совечĕ çине хунă. Америкăпа Англи блокĕн представителĕсем вара Хăрушсăрлăх Советне тивĕçлĕ ĕçсене Генеральнăй Ассамблея туса пымалли йĕрке тăвасшăн пулнă, мĕншĕн тесен унта США майлă тăракансем сасăланипех решени йышăнма май пур.

«Çавăн йышши «коллективлă мерăсем» Устава пĕтĕмпех пăсаççĕ, Устав ăшĕнчен унăн мимипе чĕрине туртса кăлараççĕ, вĕсене Пĕрлешнĕ нацисен организацийĕн, миршĕн кĕрешмелли хатĕр пулма тухăскерĕнчен, агрессиллĕ Атлантика блокĕн планĕ тăрăх, ООН ячĕпе тата ялавĕпе витĕнсе вăрçнă çĕрте усă курмалли вăрçă хатĕрĕ туса хума шухăшласа кăларнă»,—тенĕ А. Я. Вышинский.

Политика комитечĕн ларăвĕнче Америка сĕнекен «коллективлă мерăсен» системине нумай делегацисем критикăланă, вăл агрессиллĕ ĕçсем тумалли система пулнине палăртнă. Сăмахран, Перу делегачĕн ирĕксĕрех çакна йышăнмалла пулнă: «коллективлă мерăсем» йышăнасси урăх çĕршывсен хăйсен экономика ресурсĕсемпе çыннисене США аллине памаллине пĕлтерет, тенĕ вăл. Вунпĕр çĕршыв резолюцине Афганистан, Египет, Иран, Ирак, Иемен, Ливан, Саудовски Арави тата Сири делегацийĕсем пысăк тÿрлетÿсем кĕртнĕ. Вĕсен тÿрлетĕвĕсен шухăшĕ çапла: «коллективлă мерăсене» пурнăçлас ĕçе хутшăнасси кашни çĕршывшăн обязательнă пулмалла мар. Çавăн пек йĕрке тумалли çинчен Бирма представителĕ каланă.

Инди представителĕ вунпĕр çĕршыв резолюцине хирĕç каланă. Сири делегачĕ Эль-Хури ООН Уставне, сăмахран, Хăрушсăрлăх Советĕнче пурте пĕр саслă пулнипе решенисем йышăнмалли принципа хÿтĕленĕ. Иран, Кăнтăр Африка Союзĕ тата Израиль делегачĕсем Америкăн вăрçă планĕсене, ООН йышăннă «коллективлă мерăсем» тенĕскерсене, пурнăçлама хутшăнни вĕсен çĕршывĕсемшĕн хăрушлăх туса хурать тата нациллĕ интересĕсене хирĕçле ĕç пулать, тенĕ.

Вунпĕр çĕршыв резолюцине чылай тÿрлетнĕ хыççăн, январĕн 8-мĕшĕнче ăна сасăлама тăратнă. Резолюцин çĕнĕ проекчĕ ООН членĕнче тăракан çĕршывсене «коллективлă мерăсене» пурнăçлас ĕçрен пăрăнса юлма право парать. Ку проект тăрăх Пĕрлешÿллĕ Штатсем хăйсен агрессиллĕ планĕсене пурнăçлас ĕçре ООН членĕсене хăйсен пурлăхĕсемпе тата çарĕсемпе США-на пулăшма хушма пултараймаççĕ. Ку проекта делегацисен ытларахăшĕ уншăн сасăланипе йышăннă пулин те, çăннипе вăл Америкăн «коллективлă мерăсем» текен планĕ путланса ларнине пĕлтерет.

Политика комитетĕнче дискусси пынă вăхăтра Совет делегацийĕ хăйĕн сĕнĕвĕсене тăратнă. Унта «коллективлă мерăсем йышăнас тĕлĕшпе ĕçлекен комитета» салатса ямалла, тĕнчери лару-тăрури йывăрлăхсене пĕтерме, сăмахран, Корейăра çапăçма чарăнасси çинчен пыракан калаçусене ăнăçлă вĕçлеме пулăшмашкăн мĕнле мерăсем йышăнасси çинчен сÿтсе явма пĕр тăхтаса тăмасăр Хăрушсăрлăх Совечĕн ларăвне пухмалла, тенĕ.

ФРАНЦИРИ ПРАВИТЕЛЬСТВО КРИЗИСĔ

Январĕн 7-мĕшĕнче Францире Плевен правительстви вырăнтан тухнă. Правительство вырăнтан тухнă сăлтав, çиелтен пăхсан, çапла пулнă: бюджетра çар расхочĕсем валли укçа нумай панă, правительство бюджетри расходсемпе тупăшсене шайлаштарма укçа пухма çĕнĕ майсем шыраса тупас шутпа парламента сĕнÿсем тăратнă, çав сĕнÿсене йышăнас пирки сасăланă чухне правительство поражени тÿснĕ. Чăннипе правительство вырăнтан тухнин сăлтавĕ урăх. Кун пирки Францири коммунистсен партийĕн парламентри ушкăнĕн председателĕ Жак Дюкло: «Америка оккупанчĕсен требованийĕсемпе Франци халăхĕн пурнăçри интересĕсем хушшинчи хирĕçÿсем ытларах та ытларах вăйланса пыраççĕ, çавна пула правительство кризисĕ пулса тăчĕ», тенĕ.

Францире çар валли мĕн чухлĕ укçа расходланине пăхса тухсанах, Франции США правителĕсем хыççăн сĕтĕрĕнсе пыракан банкирĕсемпе финансисчĕсен политики çав çĕршыври халăха пĕтес патне илсе пынине лайăх ăнланма пулать. Франци 1951 çулта çар ĕçĕсене пурнăçлама 1 500 миллиард франк расходланă. Франци правительстви çар расхочĕсене татах ÿстерет. Плевен правительстви 1952 çулта вăрçа хатĕрленме тата Индо-Китайра вăрçма укçа нумай пама шутланă. Çапах та Плевен правительстви çĕнĕ бюджета парламента тăратса, унта йышăнтарма хăяйман. Плевен правительстви вара икĕ уйăхри расходсем çинчен закон йышăннă.

Анчах çар расхочĕсем çинчен закон йышăнасси—пĕр ĕç, ăна пурнăçласси вара—пачах та урăхла пулса тухать. Правительство умне çавăн пек ыйту тухса тăнă: укçа ăçтан тупмалла? Плевенпа унăн министрĕсем нимĕн иккĕленмесĕрех ĕççыннисенчен нумайрах укçа пухма йышăннă. Парламента налогсене çĕнĕрен пысăклатасси çинчен, социальнăй страховани йĕркине памалли укçа хисепне чакарасси çинчен тата ытти çавăн пек ĕçсем тăвас пирки сĕнÿсем тăратнă. Правительство çавăн пек политика тытса пынăшăн халăх массисем тарăхнă пирки парламент çÿлте асăннă закон проекчĕсене çирĕплетме часах килĕшес çуккине пĕлсе, Плевен хăй юратакан майпа усă курма тытăннă: вăл закон проекчĕсене йышăнас пирки сасăланă чухне кашнинчех правительствăна шанассипе шанас марри çинчен ыйту лартса сасăлаттарнă.

Çапла майпа Плевен йывăрлăхран тухма шутланă. Анчах вăл çав реакциллĕ мерăсене хирĕç Франци халăхĕ мĕн тери çине тăрса кĕрешессине, халăх вăйне шута илмен. Халăх çав тери хытă тарăхнă. Парламентри реакционерсен ытларахăшĕн те ирĕксĕрех хальхинче депутат-коммунистсем çумне пĕрлешме, Плевен тăратнă 8 закон проектĕнчен малтанхи проектне сасăланă чухнех хирĕç сасăлама тивнĕ. Кун хыççăн Плевен пĕр тăхтаса тăмасăр вырăнтан тухни çинчен пĕлтернĕ.

Кун пирки буржуалла хаçатсем икĕпитленсе çыраççĕ: парламентра лару-тăру «йывăрланнă» пирки Плевен поражени тÿсрĕ, теççĕ. Анчах маларах асăннă фактсенчен çакă уççăнах курăнать: Плевен правительстви власра 5 уйăх тăнă вăхăтра наципе хирĕçле, Францие татах та ытларах Америка империализмне пăхăнтарасси патне илсе пыракан политикăна пĕр сăмахсăрах пурнăçласа пычĕ, çавăн пирки унăн вырăнтан тухмалла пулчĕ. Плевен правительстви США империалисчĕсене пăхăнса тăнă, Франци халăхĕн пурнăç интересĕсене уççăнах хирĕçле политикăна пурнăçласа пынă, çавăнпа та ку правительствăн пурпĕрех намăс курса пĕтсе лармалла пулнă.

АНГЛИ ОККУПАНЧĔСЕМ ЕГИПЕТРА ЗАКОНСĂР ĔÇСЕМ ТУНИНЕ ХИРĔÇ

Çĕнĕ çул—1952 çул пуçланас умĕн Англин Вăтаçĕр Хĕвелтухăçĕнчи тип çĕр çинчи çарĕсен главнокомандующийĕ Робертсон генерал: Великобритани Суэц каналĕ патĕнче хăйĕн позицийĕсене сыхласа хăварма пур майсемпе те тăрăшĕ, тесе пĕлтернĕ. Çак сăмахсене вăл Британи премьер-министрĕ хушнипе каланă. Робертсон çапла юнаса хăратнă: Англин çак политикине кам та пулин улăштарма хăтлансан, çавсене хирĕç кĕрешме çарпа усă курăпăр, тенĕ.

Англи колонизаторĕсем юнаса хăратнипех чарăнманнине пурте пĕлеççĕ ĕнтĕ.

Иртнĕ çулхи декабрĕн 25-мĕшĕнче Египет депутачĕсен палатинче Англи çарĕсем Суэц каналĕ патĕнче халăха хĕсĕрлесе киревсĕр ĕçсем туни, Египет граждăнĕсене 93 çынна вĕлерни, 928 çынна амантни çинчен пĕлтернĕ.

Англи оккупанчĕсем хĕсĕрленине тата терророла ĕçсем тунине хирĕç Египет халăхĕ наци ирĕклĕхĕшĕн кĕрешес ĕçе вăйлатнипе ответлет. Иртнĕ çулхи декабрь уйăхĕн вĕçĕнче нумай хуласенче империалистсене хирĕç рабочисен, студентсен, вăтам шкулсенче вĕренекенсен демонстрацийĕсем пулнă. Демонстрацисем Египетăн нациллĕ требованийĕсене пурнăçлассишĕн, Египетăн шалти ĕçĕсене Англипе Америка хутшăннине хирĕç кĕрешме чĕнекен лозунгсемпе иртнĕ.

Египет çыннисем оккупантсене хирĕç ытти майсемпе те кĕрешме тытăннă. Суэц каналĕ таврашĕнчи портсенче Египет рабочийĕсем акăлчансемшĕн ĕçлеме пăрахнă. Египет çыннисем Англи таварĕсене илесшĕн мар.

Египетри лару-тăру мĕнле аталанса пынинчен çакă курăнать: Египет халăхĕ Англи империалисчĕсем пуç пулса тăнине хирĕç, хăйĕн çĕршывĕн никама пăхăнманлăхĕшĕн хытăрах та хытăрах кĕрешет, кĕрешÿ вăйланса пырать.

Н. БУБНОВ.

Сири влаçĕсен демократие хирĕçле ĕçĕсем

БЕЙРУТ, январĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Хаçатсем çакăн çинчен пĕлтернĕ: Сири влаçĕсем государство служащийĕсене мĕнле те пулин политикăллă ĕç тума тата мĕнле те пулин политикăллă партире тăма чарнă. Государство служащийĕсене политикăллă партисенчен тухма икĕ эрне хушши срок панă. Политикăллă партисенчен тухмасан, вĕсене ĕçрен кăлараççĕ.

БЕЙРУТ, январĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Сири влаçĕсем çĕршыври хаçатсене çаплах хытă хĕсĕрлеççĕ. Сăмахран, «Аль-Манар» хаçат çак кунсенче Сирири миршĕн тăракансем Мааруф эд-Давалибие — çар çыннисем переворот тунă вăхăтра сирпĕтсе антарнă правительствăн пуçлăхне—ирĕке кăларма ыйтакан требовани пичетленĕ. Кунсăр пуçне, хаçат Мускавра тĕнчери çĕршывсен экономикăллă канашлăвĕ пуласси çинчен «Правда» хаçатра тухнă хыпара пичетленĕ. Çав материалсене пичетленĕшĕн Сири влаçĕсем «Аль-Манар» хаçата хупма йышăннă.

Францири ĕççыннисем миршĕн тăрăшакан правительство тума ыйтаççĕ

ПАРИЖ, январĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). «Юманите» хаçат çĕршывра правительство тăвас ĕç йывăрлăха кĕрсе ÿкнĕ май Франци халăхĕ хушшинче миршĕн тата прогресшăн тăрăшакан правительство тăвассишĕн кĕрешес юхăм сарăлса пыни çинчен çырать. Пиншер ĕççыннисем забастовка тума кирли çинчен пĕлтереççĕ, пухусемпе митингсем ирттереççĕ, резолюцисем йышăнаççĕ. Çав резолюцисенче вĕсем Францин наци интересĕсене хÿтĕлеме пултаракан правительство тума требованисем лартаççĕ. Ĕнер Безон хулинчи (Сена тата Уаза департаменчĕ) «Отис-Пиф» заводри рабочисемпе служащисем пурте пекех çур сехетлĕхе ĕçлеме чарăннă. Вĕсем демократиллĕ пĕрлĕх правительстви тума ыйтса, ку правительствăн Атлантика пактне, Шуман планне пăрахăçламалла, ĕç укçин пурнăç хакланнă май ÿссе пымалли графикне тумалла, социальнăй обеспечени ĕçĕнче йĕрке тумалла тесе петици йышăннă. Рабочисемпе служащисем делегаци уйăрнă, унта коммунистсене, МРП («Республикăшăн тăракан халăхăн юхăмĕ») членĕсене тата партире тăман çынсене суйланă. Ку делегаци заводра ĕçлекенсен петицийĕпе республика президенчĕн дворецне кайнă.

Парижри, Сена çинчи Иври хулинчи, Витри, Дюнкерк, Лион тата çĕршыври ытти хуласенчи нумай предприятисенче забастовкăсем пулса иртнĕ тата митингсем иртнерĕ.

Бельги правительстви вырăнтан тухнă

ПАРИЖ, январĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Франс пресс агентстви Брюссель хулинчен пĕлтернĕ тăрăх, Бельги правительстви вырăнтан тухнă.

Демократиллĕ Германи Республикин Халăх палатин председателĕ Дикман Хĕвеланăç Германи парламенчĕн председателĕ патне янă çыру

БЕРЛИН, январĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). АДН агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Демократиллĕ Германи Республикин Халăх палатин председателĕ Дикман январĕн 10-мĕшĕнче Хĕвеланăç Германи парламенчĕн председателĕ Элерс патне çыру янă. Çырура çапла каланă:

«Демократиллĕ Германи Республикин Халăх палати ячĕпе тата вăл хушнипе эпĕ çак çырупа пĕрле Сирĕн пата Наци пухăвне суйлама пĕтĕм Германири суйлавсене иртермелли законăн проектне ярса паратăп. Ăна Демократиллĕ Германи Республикин правительстви Халăх палатине тăратнă тата Халăх палати хăйĕн 16-мĕш пĕрлехи ларăвĕнче пĕр шухăшлă пулса йышăннă. Ку закон проектне пĕтĕм Германи валли суйлав законĕ хатĕрлес тĕлĕшпе Демократиллĕ Германи Республики хăй енчен тунă ĕç тесе шутлатпăр.

Çав вăхăтрах ку закон проектне нимĕç халăхне сÿтсе явма паратпăр. Ку закон проекчĕ пирки пурте хăйсен шухăшĕсене ирĕклĕн каласа пама пултарччăр. Халăх палати хăйĕн резолюцийĕнче пĕтĕм нимĕç халăхне ку закон проекчĕ çине хăй мĕнле пăхнине палăртма тата пĕтĕм Германири суйлавсене иртерме пĕр тăхтаса тăмасăр хатĕрленес ĕçре пулăшма чĕнет».

Малалла çырура çапла каланă: «Халăх палати чăннипех те Германин суйлав законĕ пулса тăмалли проекта сÿтсе явма комисси тумалла, комиссие Хĕвелтухăç Германирен тата Хĕвеланăç Германирен 5-шер представитель кĕмелле, тесе йышăнчĕ. Çав комиссире пулма Халăх палати хăйĕн представителĕсем пулма уйăрнă çынсем çаксем:

1. Герман Матерн—Халăх палати президиумĕ председателĕн заместителĕ; 2. Отто Нушке—Демократиллĕ Германи Республики премьер-министрĕн заместителĕ; христиан-демократсен союзĕн председателĕ; 3. Лотар Больц доктор—премьер-министр заместителĕ; Германири нациллĕ демократла партин председателĕ; 4. Ганс Лох доктор—премьер-министр заместителĕ, Германири либералла-демократла партин центральнăй правлени председателĕ; 5. Лео Цуккерман—доктор, профессор, Халăх палатин конституци комиссийĕн членĕ.

Халăх палати йышăннă тăрăх, комисси Демократиллĕ Германи Республики Халăх палатин закон проектне тата тепĕр енĕн проектне сÿтсе явмалла.

Эпĕ Сирĕнтен федеральнăй республикăн федеральнăй парламентне Халăх палати ырланă закон проектне тăратма тата Наци пухăвне суйлама пĕтĕм Германири суйлавсене иртермелли законăн Демократиллĕ Германи Республикин Халăх палати йышăннă проектне сÿтсе явма тумалли пĕрлехи комиссие федеральнăй парламент хăйĕн представителĕсене уйăрасси çинчен сĕнÿ пама ыйтатăп. Çавăн пекех Сирĕнтен федеральнăй канцлерăн, доктор Аденауэр господинăн 14 пунктлă сĕнĕвĕ тăрăх Германи федеральнăй республики ку тĕлĕшпе мĕн тумалли çинчен парламента сĕнÿ тăратма ыйтатăп».

Республикăри шахмат чемпионачĕ

Январĕн 11-мĕшĕнче республикăри шахмат чемпионатĕнче виççĕмĕш вăйă пулчĕ тата вĕçлеймен партисене выляса пĕтерчĕç.

Çак вăйăра республика чемпионĕ Никитинпа Шупашкар хула чемпионĕ Чугунов юлташсем хушшинчи вăйă питех те интереслĕ пулчĕ. Чугунов юлташ тĕлпулура питĕ ăста выляса Никитина çĕнтерчĕ. Çапла вара, республика чемпионĕ çак чемпионатра икĕ хутчен выляса ячĕ. Анчах касхи вăйăра Чугунов çамрăк шахматиста Сергиевский юлташа выляса ячĕ. Чкаловски районĕн представителĕ Егоров юлташ Зилгаловран, Смирнов Сиротинпа Эллерен выляса илчĕç. Здорный Илларионовпа Аляутдинова çĕнтерчĕ. Федоровпа Сергиевский тата Персовпа Соболев хушшинчи вăйăсем никам çĕнтерейменнипе вĕçленчĕç.

Виçĕ вăйă хыççăн Егоров (унăн виçĕ очко), Федоровпа Сергиевский (2,5-шер очко) малта пыраççĕ.

Пĕлтерни

Январĕн 15-мĕшĕнче, касхине 8 сехетре, ВКП(б) хула комитечĕн парткабинетĕнче иккĕмĕш çул вĕренмелли политшкул руководителĕсем валли лекци пулать. Тема: «Совет халăхĕ вăрçă хыççăнхи вăхăтра СССР халăх хуçалăхне юсаса малалла аталантарассишĕн кĕрешни».
Лектор—А. П. Николаев юлташ.

* * *

Январĕн 15-мĕшĕнче, касхине 8 сехетре, ВКП(б) хула комитечĕн парткабинетĕнче докладчиксемпе агитколлектив руководителĕсем валли лекци пулать. Тема: «Тĕнчери лару-тăру çинчен доклад мĕнле тумалла».
Лектор—Г. И. Чавка доцент.

ВКП(б) ХУЛА КОМИТЕЧĔ.

Ответлă редактор заместителĕ И. П. ПАВЛОВ-ПИНЕР.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: ответлă редактор—0-67, ответлă редактор заместителĕ—3-99, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—5-74, парти пурнăç пайĕ—4-47, ялхуçалăх пайĕ—3-97, пропаганда пайĕ—8-61, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 00913 Типографи № 1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.